Э67
Ч-43318

## Василий ЭНТИП

# ЧĔНӲ ЧАНĔ



Национальная библиотека ЧР
4-043318

[illegible]

[illegible]

[illegible]

1980 g.

[illegible]





## Василий Энтип

# ЧĔНӲ ЧАНĔ



Сăвăсем. Поэмăсем.

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1989

ББК 84 7—5
Э 61

**Энтип В. И.**

Э 61 Чĕнӳ чанĕ: Сăвăсем, поэмăсем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1989. — 191 с.

Пултаруллă поэт хăйĕн çĕнĕ кĕнекинче экологи ларутăрăвĕ питĕ çивĕчленсе те кăткăсланса пыракан синкерлĕ тапхăрта çутçанталăк тĕнне ĕненсе пурăнакан тăванĕсен тĕнчекурăмĕнче, поэзи тĕнчинче тата тăнăç малашлăхшăн пыракан хĕрӳ кĕрешӳре чăнлăх, чунлăх тата çынлăх идеалĕсен тасалăхне поэзи мелĕсемпе шырать, чĕрĕлĕхпе çын тунă илем килĕшӳлĕхĕшĕн пăшăрханса çунать, чăн-чăннине суялăхран хăтарса куç пек упрама чĕнет.

ББК 84 7—5

Э $\frac{4702710202-115}{М\ 136(03)-89}$ 41—89

ISBN 5-7670-0154-5

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1989 ç.

Ч-43318

# ÇЫНСЕМ. ЙĔРĔХСЕМ. ТУРĂСЕМ

## Сăвă ярăмĕнчен



## МАН ХАЛĂХ

*А. Трофимов тĕпчевçе халаллатăп.*

Вăрманлă хирсенчи чечеклĕх евĕр
халь тĕрлĕ тĕслĕ-сăнлă халăх ман.
«Çĕрпе хĕвел çемйи пекех-çке эпĕр!» —
тесе шӳтлет вара чăваш тăван.

Ӳт-тирĕ ун хĕвел тĕслех, сăнатăп,
çĕр сăнлă арăмĕ Çĕрпи ятлах.
Сарри—хури, хури—сарри чăнах та
тĕкел пулма хавас пирте ялан.

Тен, ĕлĕк-авалхи куçса çӳревĕн
шăпи çăратнă чăвашсен юнне?
Пулман пирте апла-капла тиркевлĕх —
савсан пăхмастпăр ӳт тĕсне-мĕнне.

Е тӳсĕмлĕ,
е харсăр,
е хӳтевсĕр,
çĕртен те, хĕвелтен те йăлăхман —
вăрманлă хирсенчи чечеклĕх евĕр
сăнран чăпар халь чăн та халăх ман.

Таçти-таçти çынсеннилле сăнсем те
курма пулать ун аслă йышĕнче —
ăçтан-ăçтан вĕсем? Тĕнче, сĕнсемччĕ
тĕп тупсăм уççине?! Чĕнмест тĕнче...

Те авалхисенчен пĕри ман халăх,
те чăмăртаннă вăрăм çул çинче —
çут тĕнчере пурнать-ха сывă халлĕн
чуна чун туппипе ĕрче-ĕрче.

Тен, ĕмĕрхи вăй — пĕтĕçӳлĕх вăйĕ —
пур ман ырра пит хапăл халăхра:
юта тăванлатма вăл хăйнă, хăйĕ
татах та уçă кăмăлпе кура.

Кунçул карти таврах утса тухман-ши
ман халăх ĕрчесе вăй-хал илсен?
Тен, чунĕ никамран та ютăхманшăн
чечеклĕх пек хитре вăл халиччен.

## ИЛЕМСĔРЛĔХ ЧĔЛХИ

Ют манăçтарнине аса илем —
Тăнпуçăма тăрăлтарсам, илем?!

Çут тĕнчери мĕнпур сасса итлем —
Сирек хăлхаллă ту татах, илем?!

Тăван ене çавăрăнса килем —
Куçри йӳç тĕтрене сирсем, илем?!

Супăниччен сурансене сиплем —
Тăван çĕртен сĕткен илтер, илем?!

«Хупăниччен чипер пепкен
пуç лĕпкинчи çăлкуçĕ
çĕрти çăлкуç умне ӳплен —
пепкӳн тăнне вăл усĕ.

Çăлкуç шевли куçне-тивсен,
пепкӳн ӳтне чун кĕрĕ.
Чун кĕртейместĕн — хур тӳсен:
усал ырра çĕнтерĕ...»

Çакна эп илтнĕ пек тахçан —
тен, кукамай сасси вăл?
...Халь те уйчӳк шывне сыпсан,
хама туятăп сыввăн.

Унпа çусан — куç çивĕчрех,
ăна ĕçеп — чун усă.
Тăп-тăррăн палкаса вĕрех,
Тăван çĕршыв çăлкусĕ.

Çак сиплĕхлĕ çăлкуç пекки
пур пуль кашни чăвашăн.
...Ав, амăш пулнă ял пики
пил йăлине тăвасшăн.

Эппин, парсам ун пепкине
тирпейлĕ çын пулмалăх
çăлкуçунти çĕр сиплĕхне,
юратнă çутçанталăк.

## ЁМЁРХИ ЧЁНЎ

Илем туррин куҫкёскине илем-и —
тёнчен чи тёлёнтермёш тёкёрне,
унпа тёрёслесе пахма килем-и,
ыр ҫутҫанталăк, сан.иленкӳне.

Мана чи тутлă илĕртӳ пек чĕннĕ —
асран кайми сăнсем сĕне-сĕне —
чи авалхи тĕн,
ҫутҫанталăк тĕнĕ,
кунта — ытарайми тăван ене.

Шăп ун ҫăлкуҫĕпе тăванлаштарнă
ман пуҫăн ҫăлкуҫне хупăниччен —
ҫак пĕрлĕхрен ăҫта кайса пытанĕ
пĕртен-пĕр ҫĕр ҫынни?! Май ҫук иккен...

Пурнайĕ ăҫтиҫук хăй ăсĕпе те,
тăнсăрланса-чунсăрланса кайсан.
Ёмĕртенхи йăла-йĕрке сипечĕ
тĕмсĕлтерет мана хитрен, тасан.

Ҫукпа-пĕр ĕненӳ... те вутсăр ĕнтнĕ,
те шăнтнă ютшăнун сив пăрĕпе?
...Тен, ҫĕн пил чĕртĕ ҫутҫанталăк тĕнĕ
шеллевлĕ сакăрвун пĕр туррипе...

●

«Ан васкăр аннĕрсем çĕре кĕмесĕр
Тăван çĕре те çĕр-анне теме»
Тени йăх пилĕ пулнине пĕлмесĕр
Кĕтмен çĕртен хĕретрĕм питĕме.
Ах, мĕн тери вăтантăм, намăслантăм
Аннем илтсен васкавлă сăмаха...
...Ар çулнелле çитсессĕн тин ăнлантăм:
Сăмах тĕле килсен кăна паха.
Қаçарчĕ-ши е çук-ши ыр аннеçĕм
Арçынсăр кил ӳстернĕ ывăлне?
...Халь хурлăн пăшăлтатнипех йӳнеçĕп,
Пырса ларсан тăван тăпра умне.
Епле, епле çĕре асаплантарăн,
Вăл аннепе пĕр ӳтлине пĕлсе?!
Шур виткĕç айĕнче вăл — эй, мăнтарăн! —
Ӳксе лăпкас-ши «Çĕр-аннем!» тесе?
Ик амăшне нушалантарнă евĕр
Çын никама нушалантарайман...
Юратакан, çуратакан хӳтевсĕр,
Анчах вĕсемсĕр пурнăç пуçланман.
Пĕр варлăн пурăнас тесе ĕçлетпĕр,
Пĕлсен те çын шăпи пин тĕрлине.
Иленкĕ пирĕнпе тăнч ан вĕçлентĕр,
Илсен те çĕр пире те хăй варне.

Пуçланнă çĕрте Çарăмсем эс,
кунти тăрăхра Çарăмсан.
Ниçта та сана «Чарăн!» темĕç,
юмах юхăму çаврăнсан.

Юрлать-ши вăл, тем евитлет-ши? —
сасси чӳхенет: «Кĕр кĕрччен...»
Ăна витлемесĕр итлесшĕн
шыв-шур хăнкăрми кӳкĕрчен.

Çак çепĕç, чечен чĕмпĕл-чĕмпĕл
чун витĕр шăратăннă май
ăна йăлт чухласшăн ан тĕмсĕл —
кĕвви унăн вĕççĕр, нумай...

Миçе çĕр те пин çăл шăнкравĕ
тăсать-ши çак меллĕ кĕвве?
Çĕр пин çухатуллă шырав-и
хускатрĕ ăшри вĕркеве?

Пире пуплешме пиллĕн, тӳррĕн
пур чĕр çутçанталăк чĕлхи —
ăна ăнкарма кунта çӳрĕп,
ырах-и чун е вĕчĕх-и...

Уçсан çĕр-аннемĕн сип шывĕ
ăша — вутсăр çуннăскере,

тек пулаймасан та сып-сывă,
савса савăнайăп тепре.

Вара çĕнĕ сăвă çуралĕ
чĕнме савăшу ырлăхне —
ыталĕ,
ынатлĕ шур алă,
чĕртсе шухăш шухăлăхне.

●

Мэкăрать çутçанталăк, талхăрать çĕр-анне:
«Ах, мĕн пулчĕ, мĕн пулчĕ пирĕн ачасене?!

Чун кĕртсе ăстăн панăччĕ пурнăç тытма —
Çын мăнланчĕ те хатĕр пире тĕп тума.

Чăн, мĕн эпĕр халь çыншăн! Вăл — «патша» е «хуçа»,
Чĕрĕлĕх илемне кăларать пакăça...

Вăратать çут тĕнчен чи хаяр амакне,
Наркăмăшлантарса ватă çĕр-амăшне...

Нӳслĕ, техĕмлĕ пулнă шыв, сĕтек е им-сим
Йӳçĕхсе вăрлăх тĕввисене пăсĕç-шим?

Аскăнсемшĕн тем-тем лӳкесси, туртасси —
Иртĕх чир, шăп çав чир çуратать çын асси...»

Талхăрать çутçанталăк, макăрать çĕр-анне:
«Ах, мĕн пулчĕ, мĕн пулчĕ çын чунне-чĕрине?!

Усал пăврĕ ырра, ултав пусрĕ чăна —
Иртĕнет нĕрсĕрлĕх... Чăн, мĕн пулчĕ çынна?!

Тар тăкса ĕçлени кайнă пек харама —
Сĕт-çу, аш-пăш çитмест хырăмне тăрантма.

Тискер кайăк тарать читлĕхри хӳтлĕхе, —
Мамăк тир те çитмест халь çынна, çиçтĕхе.

Хатĕрленчĕ тĕнче тепĕр аслă вăрçа...
«Пĕчĕк вăрçăсенче» çапăça-çапăça

Çук пĕр ĕмĕт-тĕллев, çук пĕр турă çынсен —
Килĕшӳ килĕ-ши пĕрлĕх чанĕ чĕнсен?..»

Илтĕнет çак хĕрхевлĕ хӳхлев пур енчен,
Çĕр каç-каç хуп-хура виткĕçпе пĕркенсен.

Çил çав сасă çумне хутшăнсассăн вара
Çывăрман чунсене килет пит йывăра...

Ĕсĕклетĕп, тĕп пулнă пек чун патĕнчи,
Эп те, çĕр-аннепе çутçанталăк ачи.

## ÇУТÇАНТАЛĂК ТĔНĔ

Те тĕлсĕр пулĕç сăввăмсем, те тĕллĕ —
тăн, тĕн, юн, чун пăтраннă вăхăтра
эп килтĕм — çиçĕмпе вут-çулăм тĕслĕ
хĕвел элчи пек — сирĕн патăра.

Тăванăмсем! Сире те, çак çĕре те
юратрăм чи хӳтевсĕр туйăмпа.
...Ак сăртлăх кăлканне сирсе çӳретĕп —
ăçта асри çырулла чул юпа?!

Кунти чăваш ăна «Тĕп палăк» тетчĕ,
«Кунçул юпи вăл» тетчĕç ватăсем,
«Çĕр кăвапи» тени те илтĕнетчĕ,
каç ĕнтрĕкне путсан кăвак тусем.

Арап саспаллипе хитрен тĕрленĕ
чăваш сăмахĕ — пин çулхи хыпар.
Унта аваллăх курăннă, тĕлленнĕ,
аса ӳкни — яр уçă, ан хупар...

...Ислам илемлĕн илентернĕ, тĕнтнĕ,
чан чĕннĕ хĕреспе Христос храмне,
çаплах упраннă çутçанталăк тĕнĕ
çак таврара, килсессĕн те хĕне.

Тăванăмсем! Чун хăй уçать ĕретлĕн
чи авалхи тĕн тĕшмĕш маррине.
«Хăрушă хĕнлĕх, — пĕлтерет кĕретлĕх, —
кĕтет çĕре, çынна, çын ăруне!..»

...Çак таврана çитсен туйми пулатăп
çав чи хăрушă хĕнлĕх çитнине:
те хăй çĕртен писменнине пула тăп
тытать çĕртешĕм халь те-ха хăйне.

Хитре кунти ятсем! Йăлт хăйне уйрăм:
итле те тĕлĕн, тĕшмĕрт те тĕпче —
чи авалхи асамлă тĕнчекурăм,
сăнарлă тĕлĕнтермĕшле тĕнче...

Йăла-йĕрке, ят-шыв, пил, йĕрĕх-турă
кунта ку чух та чунлăх сыхлавçи.
...Юри ютшăнтарман пек, йăлт астурăм
эп — шутсăр çылăх урапин лавçи...

Тăванăмсем! Эсир сар каччă тенĕ
мана кунта — тĕп вăйă картинче...
Çам пӳрнĕ, кам пилленĕ, кам хистенĕ
тĕлсĕрленме çак тĕп тĕн пур çинче?!

Тăванăмсем... Сире те, çак çĕре те
юратрăм вăл вăратнă туйăмпа.
...Хула хутахайне тухса çӳретĕп,
кунта килсен туятăп айăпа.

Тĕп тĕн те, тĕп ятсем те улшăнмасăр
ĕмĕртенпе упраннине кура
ман ывăннă чун-чĕрене шăнтмастăр
«Эпир — чăн чăвашсем!» текен йышра.

Сире сахал эп сăвă халалларăм,—
час-час муритлесе чунпа ăса
пуррине мар, пулас пеке мухтарăм,
тĕлленнĕ çут малашлăхшăн çунса...

Çапах телейĕре пысăклатмарăм,
пĕчĕклетмерĕм те пур нушăра
суя сăмах-юмахсенчи капмарлăх
чăн-чăннине хуплană хушăра...

...Ак экологи самани пуçланчĕ
тирпейсĕрлĕх нушиллĕ çĕр çинче.
Кунта çав ăслăлăх та манăçманччĕ,
тĕп вырăнтаччĕ пурнăç йĕркинче.

Тăн,
тĕн,
юн,
чун
тасан упраннă вырăн
халь маншăн талай мар, çак ен пулас.
Кунта хама туятăп ыррăн-ыррăн,
чун-кăмăл та, тен, чăннипе хавас...

Çĕре тискеррĕн тĕп тума хăрамĕ
чун-чĕмсĕр, тĕнсĕр харамса кăна.
Чĕнет чи аслă çутçанталăк храмĕ —
йăлтах юхăниччен юсар ăна.

## ТӖП ЯТ

Хӑй, тути-ҫӑварӗ шӗл-кӑварччӗ,
питӗ тертленетчӗ, тупата, —
пил парсан аннем уҫса хӑварчӗ
манӑн вӑрттӑн хунӑ тӗп ята.

«Вӑл чи авалхи, ӑна халь, — терӗ, —
ху упра, чӗрӳ варне хурса.
Манӑн ҫех — усал алхапӑл ерӗ,
пуҫиле ҫывхарӗ тулхӑрса.
Вилӗме улталама хураҫҫӗ
чӑвашсем ик ят ачисене:
хут ҫинчи — чӗнме, тӗп ят — хуралҫӑ,
вӑл сыхлать тет ҫыннӑн пурнӑҫне...»

Пулнӑ имӗш йӑх пуҫне юравлӑ
вӑрттӑн хунӑ ят аваллӑхра.
Юлтӑр унӑн чӑвашла янравӗ
вӗҫҫӗр пурнӑҫ пилӗ пек асра.
Вилӗм-ҫӗтӗм ҫулӑхма хӑратӑр,
вӑхӑтсӑр ан илтӗр хӑямат —
ваттисен йӑлипеле хуратӑп
ачама та тепӗр вӑрттӑн ят.

Малашне, туссем, ман виҫ ят пулӗ —
вӑрттӑнни, ҫырни, поэзири.
Халӑхпа ҫӗршывӑмра, тен, юлӗ
виҫ ятран чи кӑмӑлли, чӗрри...

Национальная библиотека
Ч-43318
Чувашская
Республика

●

Çакна куллен, ялан
Аса илес килет,

Аса илетĕп те —
Чун çуталса илет:

Караслă пыл шăрши.
Тирпейлĕ кив кĕлет.

Çумра Элйел пики —
Çут сăнлă Савтилет.

Ак хушăк-çурăкран —
Тĕл-тĕл тĕлкĕшленсе —

Кăвак шевле кĕрет!
Выртатăп киленсе.

Кăвăлтатма пуçлать
Ачашшăн кулюкка —

Çурт çунатти çинче
Ами пур пулĕ-ха.

Кив йĕрĕх пĕрнине
Пит кăмăлланăран

Упрать вĕсен йăви
Чĕпписене аван.

Ген, чĕп те мар вĕсем —
Қаç чĕртнĕ йĕрĕхсем?

Чĕнмеççĕ-ши пиле
Чечен чĕлхепеле?!

Шитме хӳтлĕхĕнче
Чĕкеç йăви иккен —

Савни савăкланать
Ун чĕв-чĕвне илтсен.

Хута кĕресшĕн пек
Қашта çинчи автан —

Яла вăратмалла
Ун пуринчен малтан.

...Тăрса тухас килмест
Рехетлĕ кĕлетрен,

Хăратăп ăнсăртран
Хĕр амăш килесрен.

Эппин, тӳрлет, юпах,
Çут Çарăмсан çулне —

Выртма ватти курсан
Ят кайĕ ял çине.

●

Çĕр ăшĕнчи вĕри шăранчăк пек-шим
Этем ӳт-пĕвĕнчи чун чĕртнĕ юн?
Мĕн çав шăранчăк пăрлă çӳл тĕпекшĕн?
Йĕрке-тирпей мĕне тискер ăспуçшăн,

Йĕрке-тирпей мĕне тискер ăспуçшăн,
Нехек этем нĕрне çухаттарсан?
Чун сывă чух çиçсе-çунса тăрсан,
Чун сивĕ чух куç та пăхаймĕ уççăн.

Çĕрпе тӳпе — çĕрти ӳтпе чун евĕр
Е нĕрсĕр чун çунать шăранчăкра?
...Пĕрре кайсассăн каялла чĕнеймĕр,
Ку тĕнчерех вут шăратар чунра.

●

«Чун çук!» — тетчĕç... Çĕн çул теттилле
Çиçрĕ те тем сассăр ванчĕ çуттăн.
Ванчăкне пухса иле-иле
Ĕненӳ вучахĕнче эп çунтăм.

Намăссăрлăх шавĕнче ӳссе
Çĕр тавра вĕркерĕ йывăр ахрăм.
Кулчĕ сĕмсĕр. Тилĕрет кӳсе.
Арканни сипленĕ пит вăраххăн.

Чĕрĕлеп. Курма, туйма, савма
Çĕнĕрен вĕрентĕм уççăн, тавлăн...
Пўлĕх пилĕ мар, ыр çутçанталăк
Ăшшăн чунлантарчĕ ăсăма.

●

«Тăхăр шайлă, сакăрвун пĕр сумлă
йĕрĕхпе турра чысланăран
пўлĕнмен — пĕл! — чăн чăвашăн* сулĕ
уйрăлса кайсан та çут кунран.

Çĕр çинче йĕркеллĕ пурнаканăн
чунĕ çĕкленсен хĕвел енне,
путсĕрленнĕ çыннăн çунса кайнă
е çакланнă хăямат хĕнне.

Икĕ арлă аслă çутçанталăк
çут тĕнчемĕре çуратнăран
ĕмĕр-ĕмĕр пирĕн сапăр халăх
савнă ун пархатарне чунран. —

Вĕрентсе кĕртет мана мăчавăр
турă-йĕрĕхсен пантеонне.
«Чим, тăванăм, пуçăма ан çавăр!» —
тесшĕн те татма шел сăмахне. —

---

* Çарăмсан тăрăхĕнче пурăнакан тĕне кĕмен чăвашсем хăйсене чăн чăвашсем теççĕ.

Чĕрĕ, чунлă пулнă чăвашсемшĕн
тĕнчере мĕскер пурри — йăлтах,
çавăнпах пуль пӳлĕх те вĕсемшĕн
пулнă çын сăнлах — тен, кăшт йăлттам...

Хуçмасан усал асап асачĕ
хăртмĕ чунлă çын хăй сыхчине,
терт пăвсан çех питлесе ăсатĕ
кив йĕрĕхсемпе турăсене...

(Чăвашра пур халь те ӳсĕр «паттăр»,
тирансем тесен вара — пулман,
хĕсметре ӳссен те узурпатор,
пуканран çӳле хăпарайман...)

Çĕнелсе пырсассăн пурнăç майĕ
эсреле çĕнтернĕ тĕнчере,
çутçанталăка хĕн кăтартма-и?!
Чăвашсем сурма хăйман çĕре.

Темшĕн ĕнтĕ «тĕшмĕш тĕнĕ» тенĕ
çак илемлĕ те йăваш тĕне?
Эй, мĕн чул çын çĕтĕлсе йӳтенĕ
кĕреймесĕр чунлăх хӳттине!..»

Пихампар, не, хĕртсурт, анамăш
сăнĕсем-кĕлеткисем умра.
Темшĕн, темшĕн — калама та намăс! —
чĕрĕлмен вĕсем ман асăмра...

Ах, епле ятсем!.. Мĕнле йăх тавĕ
сиввĕн ютшăнтарнă вĕсенчен?!
Ĕмĕрхи поэзи янăравĕ
сăввăма чун-варлă тăвĕ, тен...

## ЙЎТЕНĔ ЙĔРĔХ

Вăл тем те курнă — чыс та, сум та, чап та,
чечек çыххи çĕклемĕсем, чинсем,
шевле вылятнă магни чăлтăр-чалтăр,
зал урнă: «Ге-ни! Ту-ра! Би-ис! Чĕĕн-сеем?!»

Урам варри е стадион кĕрлевĕн
таппи хăпартлантарнă чух вара
хăйне вăл туйнă чăн та йĕрĕх евĕр,
пĕччен юлсан çеç килнĕ йывăра...

Мăнаçлăскер, ялан вăл пулнă хатĕр
тĕнтме çăвар карса итлекене:
çўлтен — чап тўпинчен — кам асăрхайтăр
суя сăвап сăлтавсăр иккенне...

...Эй, тўрĕ вăхăт сучĕ!.. çук тек «гени».
Мухтав йўтетнĕ йĕрĕхе курса
ун тахçанхи чи çуйкăн «Би-ис!» текенĕ
ларать анасласа та çывăрса.

Леш пур çаплах, çаплах юрлать пĕр юрă—
ним чул та çĕнелмен репертуар.
Çўлтен пăхсан ăна çветуй теме те юрĕ,
аял енчен пăхсан вăл халь шуйттан та мар...

## ШАНЧӐКРАН ТУХНӐ ЙӖРӖХСЕНЕ УЛӐШТАРНИ

*Ват ҫын калавӗ*

Ҫын картне кӗрсеттӗм тин,
пурччӗ ӑс пекки —
пурӑнасшӑнччӗ имин*
ҫылӑх ҫук пирки.

Ҫӑвӑр пуралла пӳртре
тӗтӗм тӗтӗрсе
тӗрмешеттӗмӗр,
пӳкле
вилес мар тесе.

Пӗр юпах тиха, ӗне
витене хупса,
витрӗм йӗрӗх пӗрнине:
«Пӗршӗнӗр усса?!»

Нимӗрпе чӳкле-чӳкле
ыйтрӑм: «Ҫут ӑша —
ырлӑх кӳр?! Эй, ан пилле,
пӳлӗхҫӗм, нуша!..»

Ахӑрсамана ахаль
асмӗ тӗнчере —

---

* мирлӗн, тӑнӑҫ пурнӑҫпа, килӗштерсе

ак ял пуҫӗ, ҫӗр ҫӑхань,
акрӗ ят ҫере.

Ыр ут пулнӑччӗ тиха —
кӗҫенмест: виле.
Супрӑм, чакрӗ тӑтӑрха —
кӗҫ-вӗҫ ӳкмелле...

Ҫӳлӗн — пур кӑшт канрака,
кӗҫмӗр кӗл тӑпри.
Кӗсъесем те яп-яка,
кӳлтӗрме — тупри.

Ҫук хӗртсурт кив пӳртӗмре —
тӗтӗм йӳҫҫинче
ҫутлӑх сӳниччен сӗре
тӗлӗнмӗ тӗнче...

Сиввӗн кӗтӗм ир енне
пушӑ витене,
сипсӗр йӗрӗх пӗрнине
пусрӑм ҫӗр ҫине.

«Вутлӑ шӑпӑр пӗҫеркки
пулӑшӗ сире —
вупкӑн-вупӑр мерекки
пулӑр ӗмӗре!

Шырлăх — шарлака, пусса!
Ишĕл, кив тĕнче!
Ишĕр, йĕрĕхсем, ĕнсе,
шыв хăлти пулса!»

●

Татах юхса каять çурхи шывпа
Те хĕл хаярĕ, те усал шăпа...

Шавлать мăн шыв, таппи — çыран тулли.
Хӳхлет хĕнри, юрлать юратулли.

Ак путрĕ çӳл çыран ейӳ айне:
Çук кĕперсем — каçайман çӳльене.

Çулсем те татăк... Çунăп тăр-пĕччен
Шыв шавĕ хухиччен, çĕр типиччен.

Пӳрт кивĕ шăнкăрч йăвипе пĕрех.
Каç-ир ши! шăхăрас — вĕçет ĕрех.

Пуçтахланас — пĕр хĕр юлман ялта.
Пур юрă — вăл та çичĕ пин çулта.

Сăмахĕ ун сăпай — май çук манма.
Кĕвви — вилме выртсан шеп йăпанма...

Типет-шим, çак çăлкуç пекех типет-шим
тирпейлĕх те?! Чи пиллĕхлĕ ентех...
Çунсан-çунсан таçти темле тивлетшĕн
кулленлĕх, тен, çынсен чунне ĕнтет?

Чи йывăр чух упранă тим те, нĕр те
е улшăнать, е иксĕлет иккен.
Еплеччĕ еккисем!.. Ют марччĕ пĕртте...
Чиперлĕх çук, илемĕн халь... ик ен.

Кашни сăн хăйне майлă пекчĕ чăн та:
ырри тĕлĕнтеретчĕ, хурри мар.
Ыратăвăм ӳссен те, чун, ан чăнтăх —
кассан та касăлми чунри тымар.

Усал вăй сивĕтсе ютшăнтарсан та
пĕтсех пĕтмен, пур хаклăран хакли.
...Вăрат, вăрман, — пуç сĕрĕмрен тасалтăр:
пур çутçанталăк чăн-чăнни валли.

## ИКЁ ЮРĂ

Ăш вăркать,васкатăп вăрмана —
Ăшшăн йăпатас пек вăл мана.

Юратса юлас çак юмана:
Юрăхлă юсавлă юпана.

Хурланса лăпкас шур хурăна:
Хуплĕ шур хăми шар курана.

Çупăрлас çураçнă çăкана —
Çутă парĕ çумăн чух чуна...

●

Ķам калать вăрман шавлать тесе?
Ķалаçать, юрлать вăл тĕмсĕлсе.

Юнашар ларса итле юри —
Юхĕ ютăхман юман юрри.

Хурланса итле шур хурăна —
Хурăнташ пек кĕрĕ сан хутна.

Вĕрӳçле вĕрсе сирет вутне
Вĕрене вĕри вĕркевĕнне.

Авăс ăслайланă кĕр енне
Авăсланă çулçă кĕввине.

Ĕшенсе тухатăп ĕшнене —
Ĕшеленчĕк çулĕ хăш ене?

●

Сар ачаччĕ эпĕ, сар ачаччĕ,
Чĕвĕлти саркайăкчĕ, ачашчĕ.

Сар пучах пек йĕплĕччĕ, пуçтахчĕ —
Эх анчахчĕ чăн та, ах анчахчĕ!..

Сар ачаччĕ эпĕ, сар ачаччĕ —
Мĕлкене те тĕсĕм сарататчĕ.

Сăнăм çулăмсем çуратнă пекчĕ,
Куçăм сивĕ тунсăхран сиплетчĕ.

Сар ачаччĕ эпĕ, халь сар каччă —
Сăн шуралчĕ, туйăм вăрттăнланчĕ.

Сапăр пек чĕрем те харсăрланчĕ,
Сăмахпа чи шалти вăй танланчĕ.

Сар ачаччĕ эпĕ, халь сар каччă,
Саркаланса çӳрес — чун вăранчĕ,

Хĕллехи хĕвелтен хĕмлĕ çӳçĕм
Кĕлленес пек çумран хĕр иртӳçĕн,

Пӳре-пĕверĕме кăвар анчĕ,
Яш ар пултăм пулас — чун арканчĕ...

Куçĕсем çулçă пек, çулçисем куç пекех
ку енти хĕрсемпе хăвасен.
Вĕрене те, çӳçе те, йĕлме те пикех —
пур пин-пин куç та, чун та вĕсен.

Чи таса чунсене сар хĕвел хăй чĕнсен,
хурисем çĕр тĕпне чикĕнсен,
юратса юлайман хĕрупраç чунĕсем
йывăçа куçăнаççĕ иккен...

Çавăнпа йывăççем çулçă тăкнă чухне
кĕрсерен макăра-макăра
юрату сивĕнет, пушатать çын чунне,
тертлĕ тунсăх — ăшра, таврара.

Каччăсем, арçынсем çак синкер вăхăтра
туртăнсан вăрманпа улăха,
кĕвĕçӳллĕ хĕр-ар е салху, е кăра,
юлнă пек ĕмĕре тăлăха...

Сăнар шыра-шыра куç уçрĕ пуль сана.
Шăпам халь паллă ман: çак çĕршĕн ют пулманшăн
Ун ырă çыннисем савса ӳстернĕ маншăн
Сана, çăл шывĕпе çуталтарса сăнна.

Сăнар шыра-шыра эп тупрăм та сана
Тӳрех туйса илмен пулас тӳлек чунна.

Сана шыра-шыра тупман-ши эп хама?
Эп урăх çын пек халь — е çепĕç, е хăюллă,
Ман юнăмра унччен вăратайман вăй юлнă —
Вăл май паман пулас пит кăмăлçах пулма.

Сана шыра-шыра эп таврăнтăм кунта.
Сăнар та, сăн та пур умра, ытти — шалта-шалта.

## САВТИЛЕТ ЮРРИ

Хӗм писевлӗ мӑкӑнь ҫеҫки пекчӗ
Хӗремеслентернӗ хӗр сипечӗ.

...Хӗвӗнет юр — тен, ҫеҫке ҫуначӗ?
Хӗр ӗмӗрӗнчен хӗн пусланать-и?

Шурӑ кӳкӗрчен чечекӗ пекчӗ
Шуйхӑм куҫлӑ шухӑ хӗр сипечӗ.

...Шупкаланчӗ кӳкӗрчен те, куҫ та.
Шухӑш шутсӑр. Ҫӑмӑла кам уҫтӑр?

Ҫулӑмра ҫуралнӑ ҫутӑ пекчӗ
Ҫуркунне ҫухалнӑ хӗр сипечӗ.

...Ҫу ҫуйхатрӗ, кӗркунне кӗттерчӗ —
Ҫук ҫумра тус, пур хӗрарӑм терчӗ.

●

Ҫӗлен куҫӗ текен пӗчӗкҫеҫҫӗ чечек —
Уҫӑлать вӑл каҫ умӗн, хупӑнать ирпеле.

Танлаштартӑм ӑна пӗр ясар хӗрпеле:
Сӗмлӗх — уншӑн рехетлӗх, ҫутӑ — чӑн-чӑн инкек.

## ПИЛ КӖПЕРӖ

Элйел элчелҫисем кашта хураççӗ,
сараççӗ ҫиеле сап-сар хăма —
тăван чăваш валли кӗпер хываççӗ
ку тӗнчерен леш тӗнчене кайма.

«Кӗперӗ йӗс те карлăкӗ ун ылтăн», —
тесе ӗмӗрхилле юрла-юрла
ӗҫлеççӗ ватăсем — камран хал ыйтăн,
вăйпиттисем юлман пекех яла.

«Пăртак хывар пуль», — теççӗ ывăнсассăн
элчелҫӗсем, ҫерем ҫине ларса.
«Ыр ҫынччӗ», — асăнса сывлаççӗ ассăн,
ҫӗре ик-виç тумлам пыл тумлатса.

Ҫак пил кӗперӗ урлă час каҫарӗҫ
ҫур шăпине вӗҫленӗ этеме,
шур тупăкне лăшт силлӗҫ те кăшт чарӗҫ
леш айккинче — чӳк-кӗлӗ ирттерме.

Вара пуҫланӗ сумлă ӗҫкӗ-ҫикӗ
васкавлăн тунă сӗтелсем ҫинче —
унта пурин валли те ят сăй ҫитӗ,
чăвашсене кӳренмӗ, леш тӗнче.

Этем нуши, асапӗ, хӗнӗ-терчӗ
кунҫул ҫыранӗнче юлать пулсан,

чун-чӗмӗ тӳпере, тен, вӗлтӗртетӗ,
юпа ҫинчи кун ҫутине* курсан...

Йăла-йӗрке ăшши те юрă-ташă
салхуллă тумӗ юлашки ҫула.
...Сар кӗпере сӳтсен ҫултан аташӗ,
тухаймӗ вилӗм пурнăҫран мала.

Ҫапса ватса вутра ҫунтарнă хыççăн
хăмасене те чашăк-тирӗке
вӗри кӗле салатӗç ывçăн-ывçăн
элчелçӗсем ҫӗр ҫийӗн — ирӗке.

Хурланчăк сăн-питсем те ак ҫуталӗç —
хушман хуйха пит вăраха яма:
пурне те пурнăç панă ҫутçанталăк
ан ӗлкӗрейтӗр кăмăлне хуçма.

●

Эп хытсассăн пытарма ан пырăр,
Сар хӗрсем, хура чиперккесем,
Юлашки ҫула ăсатăр ыррăн:
Ҫайăр каялла, кӗпер ӳксен...
Тупăкăм умне пырса тăрсассăн,
Пӗшкӗнсен, тăпра ярас тесе,
Савăшмашкăн тухăп сатур саслăн,
Йывăр тупăк хуппине хирсе...

* вилтăпри юпи ҫине ҫапса лартнă кӗмӗл укçана «кун ҫути» теççӗ

# ÇĔРПЕ ТӐПЕ

## Мир поэми



«Ҫăлтăр витĕр ҫул курăнать...»
*Ятсăр поэт юрринчен*

Ыйăхсăр каҫсен ҫăлтăрĕпе
калаҫатăп тарлă кантăк витĕр —
шел,
шевли ун чĕлтĕрти йĕрпе
шăранса юхать тумла кĕввисĕр.
Уҫлăх варринчен хурав ҫути
ҫитнĕ тейĕн —
ҫиҫĕнет шенкеррĕн...
Хĕм йĕппи —
те лазерлă ҫăрти? —
вĕтелет куҫа.
Ўсет синкерлĕх...

Мĕн-ши ун сăлтавĕ?
Мĕн пирки
пусăрăнчĕ кăмăлăм сасартăк?
Кăмăл çех-и?
Çут тĕнче йĕрки
хăй арпашăнасшăн пек...
Кам чартăр?!
Тин тăп-тăрă пулнă тӳпене
пĕлĕтсем тухаççĕ тĕксĕм сăнлăн,
хупăрлаççĕ те çăлтăрсене
çĕрелле анаççĕ —
сăрт пек —
сăлăк.
Çутçанталăк çилĕпе çилли
çуйăхса çитсе çĕре силлет-и?
Ак асар-писер тăман çилхи
уçлăх çутлăхне хуплать сивлеккĕн.

...Кантӑк шӑнчӗ:
пӑрлӑ чӗпчӗрке —
ун хӗрри,
варри — асам ӳкерчӗк.
Те асӑрхаттарчӗ — чӑрр! чӗрсе
тем тӗрлет ҫил —
каскӑч пек —
тинкерлӗн.
Мӗн упрать-ши ҫил хӑй асӗнче?
Мӗн вӑл курнӑ,
мӗн курать,
мӗн илтнӗ?
Вӗҫнӗ май вӗҫсӗрлӗхре темччен
вӑл мӗнпур сасса хӑйпе,
тен,
илнӗ?
Тен,
пулас ҫӗн пӑрлӑх тапхӑрне
уҫлӑх ӳкерсе кӑтартрӗ тимлӗн?!
...Ют тӗп тунӑ евӗр ачине,
каҫӑхса хӳхлет шур амӑш ҫилӗн.

Лăпкăн,
       çуттăн,
              çăмăллăн,
                     тасан
ўкекенччĕ хĕл уявĕн юрĕ.
Куç папакĕсем çеçке çурсан
çуралатчĕ çĕн юмăх,
çĕн юрă.
Юрчечеклĕ шур тасалăхра
чун тĕнчи шалтан çуталнă пекчĕ.
Сăлпăран сивви шăнтсан вара
кил ăшши киленĕç те сипетчĕ.
...Шурчĕ çĕр-çанталăк пĕр каçра.
Аш вăркарĕ,
кўтрĕ.
Вĕçрĕ хăртăм.
Те тĕнче урмăшнине кура
тапрĕ ак чĕрем те кăрттăн-кăрттăн.

Юншăхлать,
ӳлет такам тулта —
шăннă çутçанталăк чунĕ пулĕ...
Ķам ăна хăратнă тăвăлта?
Ăшшалла кĕртесчĕ — сивĕ пӳлĕм.
Тен,
татах,
татах эсрел мĕлки
çĕр тавра вĕçсе çӳрет тискеррĕн?!
Юххасен шăп çавнашкал екки:
юн юхман чухне тӳсеççĕ эрлĕк.
Юнамасть-ши уçлăхран:
«Хăра!» —
çĕн усал çĕн кăралпа хаяррăн?!
Çăлтăрсен вăрçи,
тен,
таврара?!

Чим,
усал эсрел!
Ан çуйăх!
Чарăн!!!

Ячӗ шеп-иҫ — ҫӑлтӑрсен вӑрҫи...
Шеп-мӗн унӑн вӑрттӑн хӗҫпӑшалӗ...
Ҫам ӑнлантарайӗ — сӑвӑҫ-и? —
камсене вут сӑнӑсем ӑшалӗҫ?!
Ҫам шӑпӑрланпа пӗр каварли —
сӗмсӗрри,
патпахсӑрри —
ҫынах-ши?
Ҫам этемлӗхпе шӑп хӑй валли
вилӗм хатӗрлет — вӑл та ҫынах-ши?!
Ҫам хастар,
хӑюллӑ,
паттӑр,
аслӑ?
Ҫам тискер вӑй пуҫӗ е... чури?
Ҫам халь ы р ӑ?
Ҫам у с а л,
а л п а с т ӑ?..
Мӗн асри,
ӑшри,
умри,
чунри?

Çын тин çеç-ха —
юмахри пекех! —
вĕççĕр уçлăха вĕççе тухсаччĕ,
сăнасан,
ураланан пепке
çунатланнă евĕр туйăнатчĕ...
Чăн та,
çĕр сăпки хĕрне кăна
пуçласа çын ярса пусрĕ пулĕ —
пур енчен тĕллесшĕн те ăна,
татăлас пек ун малашĕн çулĕ.
Çĕр çинче
çĕрте те
çĕр тавра
вăрçăн вăрттăн хатĕрĕ халь шутсăр.
Теп,
çĕр пĕтме пўрнĕ ункăра
чи хăрушă мина евĕр шутăр?!

...Çĕр çыннишĕн çăлтăрлă тӳпе
ĕмĕр-ĕмĕр пулнă ыр пил енĕ,
тилмĕрсе пăхса тĕн йăлипе
вăл çав çӳльентен сăвап кĕлленĕ.
Çутçанталăк ырлăх-сиплĕхне
парнелет тесе тӳне те турă,
çын —
айван-и,
мĕскĕн-и,
сатур-и —
ĕненсе пуççапнă вĕсене.
«Ăстăн ăнкарми вĕççĕрлĕхре
пултăр ним варалайми тасалăх,
ун çути ан сӳнтĕр сĕмлĕхре», —
тенĕ ăрăмçах ăру е халăх...

Çавăнпах пуль пулнă вăйлă,
аслă
аялтисенчен тӳпе турри,
вăл аçа çапать пулсассăн паллă:
çылăхлă ун çĕр çинчи чури.
Çут тĕнчен хаяр е ырă вăйĕ
пăхăнсассăн çав турра кăна,
кам «вăл çырнинчен» иртмешкĕн хăйĕ?
Мĕн кĕтет урса каякана?..
Çутă тӳпе мар-мĕн, вутлă тамăк.
Ун хуçи те турă мар, усал.
Çук-мĕн ун çăтмахрилле ытарлăх.
Лекрĕн-тĕк унта — çунса тасал...

Ененӳ сӳнсессĕн, пурнăç тĕлсĕр:
хĕснĕ чун пуçлать те сӳлеме
виркĕнет сив шухăш —
сассăр,
тĕссĕр —
«турăсемсĕр юлнă» çӳльене...
Тĕн —
тем тĕрлĕскер —
май панă мар-и
пайлама çĕрпе этемлĕхе,
турă та ăна е панамарь те
пĕрлештерейме-ха халлĕхе...
Тен,
чи ырă çутçанталăк тĕнĕ —
çут тĕнчен тĕп тĕнĕ пулайса —
ютшăнулăха хăр-харсăр çĕнĕ,
халăхсемшĕн çĕн тĕллев тупса?
Çак халь — чăнлăх:
чи хитре тĕллев те,
ун ятне çĕртсен, килмест чăна —
мăйăр хурчĕ пек хăртать чуна...
Ах, епле çăвак ултав «тивлечĕ»!..

...Çынсене çут малашпа йăпатнă —
тиранла манмасăр пуç яма —
çулпуçланакан...
                    çитмен юпа та
ятсăр тăпрасем çине лартма...
Нĕрсĕррĕн мĕн пуррине тĕп тунă
«çăтмахла пуласлăх» ячĕпе.
«Халăх тăшманне» сасартăк тухнă
чи таса çынсем...
Çăлман тӳпе! . . . . .
. . . . . . . . . .

«Çутçанталăк патшине» те лартнă
тамаша хуçи хăйне хăех,
«парăнтарнă» та ăна «муллатнă»,
«çĕнетсе»... тĕп тăваспа пĕрех.
Амăшле пит тӳсĕмлĕ пулин те,
çутçанталăк каçармасть ялан.
Эх, вăл кам путсĕррине пĕлинччĕ,
тавăрма хăйинччĕ:
                    «Ан айлан!..»

...Тен,
вăл тавăрать те —
                    хăй манерлĕ:
е çил-тăвăлне ахăрттарса,
е —
ан пултăр тенĕн сăнĕ нĕрлĕ —
сĕмсĕр çыннăн генине* хăртса...

---

*вăрлăх тĕввине

Пур,
тен,
çутçанталăкăн тĕп вăйĕ,
пирĕн ирĕке пăхăнманскер:
тен,
çав вăй çех тулăклă тăвайĕ
çын йăхне?
Вăл —
кур! —
ку чух тискер.
Наркăмăшлă имçампа вăл мар-и
муритлет çĕрпе чĕрĕлĕхе?!
Тăрă сывлăш çĕр çинче юлмарĕ,
шыв нӳсне туйми пулать чĕлхе.
Амăш варĕнчех чăлахланаççĕ
ирсĕр чир-чĕр ертнĕ пепкесем...
Мĕн ку?!
Пĕлеесчĕ!
Ăнланасчĕ!
Чунăм чăлахланнă пек — кичем...

Эх,
аслатилле —
ҫитсессĕн хал —
кĕрр! кĕрлесчĕ:
«Ан харкашăр урăх!
Қăмăлçах тирпейлĕх кирлĕ халь!..»
Усалсем —
илтес пулсан та —
урĕç.
Вĕççĕр çунăхатăп:
«Эй, мĕнле
килĕшӳ тăвар?!»
Çĕр чунĕ — чĕмсĕр...
Мĕншĕн ăс чунпа кĕрешмелле?!
Чĕрĕлĕхсĕр юлтăр-шим тĕнчемĕр?!
Мĕншĕн çутçанталăк ачисем
аслă амăшне хăртма та хатĕр?!
Қам эс,
тĕпсĕр тӳпери?
Чĕнсем?!
...Чăнлăх шырасах тинкем тухать-тĕр.

Ах! тесен ах тухӗ* тенине
сусӑнас патнех ҫитсен те манмӑн:
чи хакли,
чи тӑванни пур манӑн —
ҫухатас килмест-ҫке вӗсене.
Ыйӑхсӑр каҫсен ҫӑлтӑрӗпе
ҫавӑнпа час-час эп калаҫатӑп,
юрӑҫ курнӑ ҫулӑн ҫутипе
ӗмӗтсен илемлӗхне каҫатӑп.
Шутсӑр шел те,
шухӑшпа кӑна —
Ҫук поэтӑн урӑх майӗ,
мелӗ.
Эй,
курса ҫӳресчӗ пӗр кана
тӗнчене! —
пулман ҫав виҫ терменлӗ**...

---

* ах! тесен ах, вупкӑн, тухать те кил-ҫурта аркатма пуҫлать тенӗ чӑвашсем ӗлӗк

** утса, ишсе, вӗҫсе ҫӳреме пултаракана виҫ терменлӗ тенӗ чӑвашсем юмах-халапсенче

Ĕмĕр-ĕмĕр ĕнĕк пурнăçпа
пурăннă тĕнчен чăн-чăн поэчĕ,
çĕр тавра вăл чикĕсĕр çулпа
çӳреймен,
пулса чи ирĕк элчĕ.
Инçете те ытларах чухне
вăл ката хĕрри таран çеç курнă,
нишлĕх пусмăрласшăнран чунне
тăвăрланнă унăн касĕ,
кунĕ.
...Çăлтăр хĕмĕ — сивĕ пӳлĕмре,
сăрхăнать пăрланнă кантăк витĕр.
Тен,
çула тухайăп ӳлĕмрен —
ĕмĕте аса хывас,
ан вилтĕр.

Чун тĕнчи — ăшри усрав тĕнче —
çут тĕнчепеле шайлашнă майăн
хĕн курма пуçлать:

мĕнпур енте
чунилли текен тăшман нумай ун.
Эп çак ик тĕнче пĕтĕçĕвне
упрăттăм тирпейлĕн те тĕллевлĕн:
çыннăн чи сăваплă тивĕçне
тăвĕччĕç чунпа ăс-хал телейлĕн.
Килĕшӳллĕ чăнлăхлă ырра
тĕп тĕн тунă пулĕччĕ этемлĕх —
туслă, аслă пĕрлĕхлĕ йышра
ĕмĕр-ĕмĕр пулĕччĕ çителĕк...

«Вилĕ чун — тип тилпĕрен пĕрчи.
Хăрăк чунăн хӳтлĕхĕ — хăт,
канăç.
Нĕрсĕр чунăн хăйĕнле хăтланăш...
Мĕн чун тĕпĕнчи е тӳпинчи?» —
тет ытарлăх,
тупмалли юмах:
те ăслăккăйран ăна эп илтнĕ.
Тупсăмне ăнкартăм халь хамах —
тен, ăна уçма та вăхăт çитнĕ?
Чунсăр сив ăссен тискерлĕхне
халăхсем хальччен тӳссе курман-и?!
Тен, тирансене те вăхăт манĕ,
çын манаймĕ чун-чĕм эрлĕкне...

...Çутçанталăкăн вăрттăнлăхне
шăп çав чунсăр сив ăс уçнăран-мĕн
вăтăрать усал вăй ку чухне
чĕрĕлĕх кăкне —
тен, ним чараймĕ...
Шутсăр вăрçă хатĕрĕн хăвачĕ,
çын çултан-çул йӳнĕрех вара.
Мĕн пĕр çын?
Çут шанăçсăр хăварчĕ
эсрехун этемлĕхе: хăра!
Усалсем чи çивĕч ăстăна,
чунлăха тара тытса урасшăн,
вăй чури тăвасшăн та çынна
çут тĕнче хуçи пулса курасшăн...

Чăн та,
чи хăрушă мина пек
çаврăнать хĕвел тавра çĕр халĕ,
ăнсăртран сиксе тухсан инкек —
вăл вут-тăвăл сĕмĕнче çухалĕ.
Йалт — чĕрри,
          чунли те
          чунсăрри —
кĕлленсе хура юрпа хупланĕ,
тӳперен те наркăмăш нӳрри,
вилĕм сĕрĕмĕ çĕршер çул анĕ,
асĕç тăвăлсем...
                    Қам ун чухне
шăн çĕре эмеллĕ,
               сиплĕ,
               чĕртĕ?!
...Ăшă сывлăш кантăк юр-пăрне
ирĕлтерчĕ —
тăп-ха каç та,
çĕр те.

Тен,
çак иккĕленчĕк шухăшсем
кăмăла пăсни те кăлăх пулĕ?
Кăлараймĕ çĕр çинчен хĕссе
эсреххун та пурнăça — çын пӳлĕ.
Е кĕтрет хăтарĕ тĕнчене,
е пĕтĕçтерӳллĕ çирĕп чунлăх?
Чи хăрушă вăрçă хатĕрне,
тен,
чăнах тĕп тăвăпăр татуллăн?..

Ырă ĕмĕтпе йăпаннă май
эп поэзи тĕнчине куçатăп.
«Аслă ăстасен йышне пуç тай!» —
хушрĕ пек такам,
унти хуçа-тăр.
Шухăшăм,
ан шуйхăн —
шуххăн шух!
Çуталать виç асаматлă шуçăм
эп çав тĕнчене вăратнă чух.
Тайăлать —
канаш ыйтса пуль —
пуçăм.

Эп,
мухтав муталаман поэт,
кĕрмекленĕп-и,
вăй-хал çухалнăн?
Пурнăç кĕтретне упрас килет —
мĕн тăвайăп уншăн халь,
çĕн халлăн?
Çĕр,
    тӳпе,
        этемлĕх илтмелле
янратасчĕ сăввăма мăнаçлăн
тĕнчери кашни чĕлхепеле —
хăпартланнипех пулаймăн аслă...
Мĕн ăс-хакăлпа чун-чĕм уççи?
Сăвă-и?
Ăна сахал чухлаççĕ...
Халăх шухăш-кăмăлĕн хуçи
манăн та чи кирлĕ чух пуласчĕ.

Шăп çак пархатарлă тĕллевпе
аслă ăстасен пилне
илтесшĕн
тим хурап,
чун-кăмăл еккипе
çут поэзи тĕнчине ųртсессĕн.
Чикĕ те,
чару та çук унта,
вăхăт та ĕмĕрлĕхпе танлашнă,
вилĕмсĕррисем пĕрле — юнташлă,
Йышăнмаççĕ суйкăна,
юта.
Çунтарса,
çакса,
персе
вĕлернĕ
генисем тăраççĕ чĕрĕлсе:
çунăк сурансем те çĕвĕленнĕ,
темшĕн çунăхаççĕ чĕресем...

Чи таса сăнсем!
Мĕн чунлантарнă
вĕсене халь ас тĕкĕрĕнче?
Пухăнса çавра тӳпе енче,
тĕнчене тăнлаççĕ, чăнлăх тарнăн...
Тин курнисенчен чылайăшне
чĕртрĕ пулĕ шухăшсен хăвачĕ.
Туслăх чухлĕ-и тулай мĕнне? —
тăванла пурне те чыс тăвасчĕ.
Чĕнчĕ пек чи тивĕçлĕ хăна:
«Сан патна та çĕнĕ пӳлĕх кĕрĕ.
Пархатарлă сăвăсем кăна
пулĕç ыт-тĕкел тĕнче еткерĕ...»

...Тӳпепе çĕр хушшинче — тӳпем.
Ун тавра шур пĕлĕт ункăн-ункăн
çаврăнать, вĕçес пек çут тĕпек.
Ункăланчĕ çутлăхри мăн ушкăн.
Хĕн чи аслисен умне тăма:
чăн сăмах пуçа хĕç евĕр касĕ.
«Вăхăт шăл çисе тупа тума
ак сана та!» —
чĕнчĕ вирлĕ сасă...
Чыслăх сучĕ евĕр тĕрĕслев
пуçланать поэзи тĕнчинче те.
Вăхăтпа тавралăхăн инçечĕ
çывхарать —
тен, çĕнелет тĕллев?..

«Ҫăлтăр витĕр ҫул курăнать» тенĕ
ҫын — умра! Тав ятсăр юраҫа!
Ăс-хавалĕпе вăл пулнă гени.
Каснă-шим пуҫне хурах-хуҫа?!
Ҫĕвĕллĕ мăйне ҫуллать пек ҫулăм.
Ҫăлтăр хĕмĕ вĕҫрĕ пек куҫне.
Вут умне ларасчĕ ҫӳма-ҫумăн
кĕскетме тĕнчен хура касне...
Юрăҫ сăнĕ ҫиҫрĕ те ҫухалчĕ,
тӳпере шенкер йĕр хăварса.
...Аслă юррине юрлаҫҫĕ халь те
Ҫăлтăрлă хула таран савса.

Ҫăлтăр витĕр курнакан ҫул ҫӳллĕ:
ҫуталса кайса тĕл-тĕлĕпе
малалла чĕнет —
пĕрлешĕҫ ӳлĕм
пурнăҫ сулĕ ĕмĕт ҫулĕпе.
«Турăсемсĕр юлнă» уҫлăх сĕмĕ
суратать ак нĕрсĕр сăн-сӳрет...
Шухăшсен шевли хăварнă хĕм-и
сутăран малта вĕҫсе ҫӳрет?
Тен, ҫав вичкĕн шухăшсен хăвачĕ
чĕм кĕртесшĕн сив пушăлăха?
...Ман умма мĕлкесĕр Ырă анчĕ —
пулăшма пире вăл пуҫлĕ-ха.

Эй,
чăмланнă сăмахсем,
чунланăр
техĕмĕр тасалнă май татах!
Ак —
пур ен пĕр харăс шуçăмланнăн —
çывхарать сăн йышĕ ман пата.
Пÿлĕнет те çил хÿхлевĕ евĕр
авалхи асап юррин çемми
йыш варне тухса тăрать хÿтевсĕр
кĕлсĕр-хăрăмсăр вут — Несими*
Çулăм — тумĕ,
шĕл-кăвар ун ÿчĕ:
те умра вăл,
те — хĕвел енче?
Тен,
чун сăнлăхне курма май кÿчĕ
тĕнчене шăнăçайми тĕнче?..

* азербайджан поэчĕ (1369—1417 çç.), пантеизм вĕрентĕвне халăх хушшине сарнăшăн, илеме çут тĕнче пулăмĕсемпе илем идеалĕ вырăнне хуракан этемре шырама чĕннĕшĕн ортодоксла тĕн çыннисем ăна ÿтне чĕрĕлле сÿсе илсе вĕлернĕ.

...Чун йăпатмăшĕ йăпас йĕркеччĕ,
маннăччĕ вăл арпашу мĕнне,
çирĕплĕх пуртан ăшри вĕркев те
аркатмастчĕ сăвă тытăмне.
Çут тĕнчен те,
пурнăçăн та,
ман та
килĕшÿллĕ çемĕ пурччĕ пек...
Мĕн ку —
тĕрĕсленмелли самант-и
е хăрушă тĕлĕклĕ инкек?!
Пур-и манăн тивĕç,
пур-и ирĕк
вилĕмсĕррисен умне тăма?
...Çĕр-çанталăк пархатарĕ — пирĕн,
сар çанталăк упрĕ ятăма...

...Вилĕмлĕ чиртен чĕрĕлнĕскер,
пĕлтĕм эп тăн тĕлĕкĕ мĕнне те:
курăнăвĕ ун е пит тискер
е — ытарлă,
тĕсĕ те минретĕ...
Ун тĕнчи е капăр,
                                        е — пуш-пушă —
ним пулман пекех ниçта нихçан,
пушăлăх...
                    Хĕнпе куçа уçан,
йăпанасчĕ — т ĕ к с ĕ м ь е н  хăрушă...
Эй,
тĕнче!
Эс — тĕпсĕр тĕксĕмьен-мĕн,
ç у т ă е н — хĕвел тавра кăна.
Çын та икĕ енлĕ —
тĕшмĕртсессĕн,
тăн та,
чун та çăлаймасть ăна...

Эп çутăенте илем шырарăм,
тимлĕн сыхланса нĕрсĕрлĕхрен.
Те хистевлĕ тивĕç ку,
те парăм —
çын несĕллĕхне упрать чĕрем.
...Пур-шим вăрттăн ирĕкĕ чăнах та
вĕçсĕр-хĕрсĕр уçлăхлă тĕнчен?
Шăп çак самантра ман пуçăнасчĕ
ăнкарма ун кăмăлне —
пĕччен...
Ак вĕçсе çитми вĕçсĕрлĕхе
ӳт,
ăн,
чун
туйма пуçлать пек шиклĕн!..

. . . . . . . .

Қаç хӳтевсĕр,
ир хĕвел ташшиллĕ —
çĕннĕ тăрă çутă сĕмлĕхе.

Çутçанталăк синкерне сиреççĕ
хĕвеле пăханакан çилсем.
Эп татах вĕçевçĕ-çулçÿревçĕ —
ĕмĕт илĕртет:
«Хуса çитсем!»
Вĕçевпе поэзи атрибучĕ —
ĕмĕрхи çунат —
кивелнĕрен
çутăран та хăвăрт шухăш пулчĕ
çĕн хăват — ак виркĕнеп хиврен!
Тав сана,
çул уçакан п ĕ л ÿ л ĕ х!
Ăнкарса пырса вĕççĕрлĕхе,
сын хăй килĕшÿллĕ тăвĕ ÿлĕм
хăйсене çех тивĕç пĕрлĕхе...

Ҫӑнлӑхпа татулӑх —
пӗр тӗллевлӗн! —
пурнӑҫа йӗркелӗҫ ун чухне:
чунлисем нимпе те вӗтеленмӗҫ,
чунсӑрри тустармӗ ҫунчӑкне . . . .
. . . . . . .
. . . . . . .
тен,
ку — ӗмӗрхи ултавлӑ шанӑҫ,
айвансен тӗп тӗнӗ евӗрскер?
. . . . . . .
. . . . . . .
поэта,
паллах,
поэт ҫех шанӗ —
пӗр-пӗрне эпир- мӗн евитлер?

Çылăхсăр хěртен таса яш критик
тиркешме пуçланине туйсах
вилěмсěр поэтсенчен пěри те
мăнланмарě,
эп чěнсе пухсан:
асăмра сăнарласа чěртмен-и
вěсене эп ырă ирěкпе.
Канашланнă чух —
паллах! —
именěп,
Пил ыйтса пуç тайăп ерипе.
Танлă çын та еккипе пырать-çке
йыш умне явап тытма тăрсан.
Аслă тěп тěллев:
Çěре упрасчě
чěррěн,
ирěк пурнăçлăн,
тасан!

...Поэтсем юратнӑ пиллӗ ту-сӑрт
пулнӑ ҫӗрӗн тӗрлӗ енӗнче,
халь ҫут тӳпемсен карти чул тумсӑр —
йӑлкӑшать поэзи тӗнчинче:
Х ӗ р л ӗ  т у  Я л ятлипе пӗр ҫумӑн,
В и л ӗ м с ӗ р ӗ н  т ӑ в ӗ те унтах,
ав — Т а й ш а н ь, ·
ун хыҫӗнчи — Меру-мӗн,
Х а р а ятлискер те ҫап-ҫутах;
пур К у н л у н ь,
П а р н а с,
Ч э н д у,
М и к а́ с а,
Ц з и ч ж о у  та  Н и к к о катара...
Ҫак мӑнаҫлӑ курӑну пӗр касӑ
ҫиҫрӗ те вырнаҫрӗ ман тавра.

---

Ял, Хӗрлӗ ту — хаваслӑх, юрату тата ҫурату туррисем пурӑнаҫҫӗ тенӗ тусем (Египет)
Вилӗмсӗрӗн тӑвӗ — Шумерсен ҫӗршывӗнчи ту
Тайшань — Китайри 5 таса туран пӗри
Меру — Авалхи Инди мифӗсенчи тӑррипе тӳпене перӗнекен ту
Хара — Авалхи Иранти турӑсем пурӑнакан тасалӑх тӑвӗ тенӗскер
Кунлунь — Китай Олимпӗ
Чэнду — Китайра чи ҫӳллӗ шайри илемлӗх тӑвӗ тенӗскер, ун хысакӗнче, улӑмран тунӑ пӳртре, Ду Фу пурӑннӑ имӗш
Микаса — умӗн иртсе ҫӳрекенсем чӗнсен хирӗҫ чӗнекен ту тенӗскер (Япони)
Цзичжоу — Тӳпеай тӗнчи
Никко — Хӗвел Ҫути тӑвӗ (Япони)

Бо Цзюй-и Луньмэнь ҫинчен ак анчĕ,
Нючжушань ҫинчен Ли Бо анать,
Чул хапха енче Ду Фу ҫуйланчĕ —
пурнăҫри тусне кĕтсе сăнать...
Хурлăхлă куҫҫуль ҫăлкуҫĕ
юнлă,
тăрăлать,
ҫĕртен туллин тапса.
Лорка чĕрĕлсе тăрать!
Хăюллă,
аллинчи чечекĕ пек таса.
Океан кĕрлевĕнче чунланнă
каптăм чул ҫын кĕлетки пулать:
Исла-Неграна Неруда аннă,
тирантан — кур! — йĕрĕнсе кулать...

---

Луньмэнь — Бо Цзюй-и поэта пытарнă ту
Нючжушань — Ли Бо поэта пытарнă ту
Чул хапха — Ли Бопа Ду Фу пĕрле пурăннă ту (Китай)
Хурлăхлă куҫҫуль ҫăлкуҫĕ (Аинадамар)—Гарсиа Лоркăна вĕлернĕ вырăн (Испани)
Исла-Негра — Пабло Неруда пурăннă вырăн (Чили)

Арканать тĕрме,
чи тăвăр читлĕх, —
ирĕке тухать çул виçекен
Африкăн çын сăнлă çавраçилĕ:
вăл Малоизе поэт иккен.
...Те çĕкленĕ Чернобыль кĕрлевĕ,
вăратса чи йывăр ыйхинчен? —
ялкăшса
вирт янă виркĕс евĕр
Çеçпĕл таврăнатьката енчен...
Çеçенхир ăрши сăн çутрĕ — Бабич!
Кĕслету енче — тăван сăнсем.
Ачашланчĕ ăшă варкăшпа пит —
çĕр,
тăхта —
халех ту ан сĕнсем...

---

Бенжамин Малоизе — Кăнтăр Африкăн тĕрмере пусне хунă поэчĕ
Шайхазада Бабич — пушкăртсен трагедилле шăпаллă поэчĕ, 1919 çулта тискеррĕн тĕп тунăскер
Кĕслету — чăваш халăхĕн поэтне Я. Ухсая пытарнă ту (Пушкăрт АССРĕ)

Тен,
поэзи тĕнчинче тин тупнă
поэтсем татулăх,
хўтлĕх,
кил?
Фашистла палачсене тĕп тунă,
ыталанă Тукая Джалиль.
...Çук ток янă йĕплĕ пăралуклă
гетто,
тĕрлĕ лагерь те тĕрме,
çук унта элек,
чуралăх,
çуклăх
поэта муритлесе çĕртме.
Чыс çăлтăрĕсем пур — Данте,
Пушкин,
Лорка,
Несими —
çав тĕнчере,
вĕсемпе пĕрле ят-сумлă ушкăн
пысăк тимлĕхпе сăнать пире.

Ту тӳпемӗсен карти шевлеллӗ,
ункăн-ункăн çиçӗнет —
хитре.
Майӗпен тӗтреленсе шӗвелӗç
мӗлкевсем те сулхăн хӳтӗре.
Вăрттăн курăну —
тем хыпарçи вăл? —
йăлкăшса илсе сӳнет вăрах:
е вăл куç шăрçинчинчен те çывăх,
е таçта чӗнет çав хушăрах...
...Ту капламӗсем те пӗчӗкленчӗç,
вут карта ванса кайсан чăл-пар.
Вилӗмсӗр сăнсем вӗçсе çӗкленчӗç —
çăлтăр витӗр куракан,
çул пар.

Эп —
канашлă ĕç тума пуль —
юлтăм
çĕр-çанталăк варринчи килте,
хама хам текех туймарăм юттăн
кĕнеке çутиллĕ тĕпелте.
Пур тĕп миссийĕ чун-вар поэчĕн,
чи ырри — поэзи çут тĕнчин:
çынсене татулăх тирпейне чĕн,
ан питле мĕскĕнленсессĕн тин...
Имлĕ-симлĕ чĕрĕлĕх илемĕ
ĕмĕр-ĕмĕр пултăр куç çути,
пирĕн çĕр çинче ун чух сĕмлеимĕ
çĕнĕ пăрлăх тапхăрĕн çурти...

...Куç хупăмĕнчех таçта çухалчĕç
кĕмĕл сăнлăх та,
сăнсем те ак.
Йăлăхтармăш тунсăх çулăхать-и —
кăмăл сÿрĕк,
сăмахсем вачак. .
Қăнăçасчĕ — канăçсăр чĕре,
пăлханать,
пусарăнать вăл темшĕн:
те хÿтевсĕр пурнăçлă этемшĕн,
те илем хутне кĕре-кĕре?
...Қаçсерен пĕр чĕптĕм те çук ыйхă,
çурăлса каяс пекех чĕре.
Çыншăн намăс!..
Қам пиртен пил ыйтĕ,
тĕп тусан этемлĕхпе çĕре?!.

Турă та,
тиран та,
мăн тӳре те
юсайман-ха пурнăç пăтравне...
тен,
çĕн пĕрлĕх малашне тӳрлетĕ
çĕр çинчи усал-тĕсел тавне?
Е чи сăхă вилĕмлĕ хăрушлăх —
çĕр çинчи,
шыври,
çӳл тӳпери —
тимлентерĕ сиввĕн,
талхăруллăн
çынсене:
«Е шеллĕп тетĕр-и?!»
Е тĕнче пĕтес патнех çитмесĕр
май тупаймăпăр та тăнланма?
...Пурнăç пархатарĕпе те мелсĕр
усă куракан кам?
Алама!

Тем те турĕç —
вараларĕç,
хăртрĕç,
хĕсрĕç чи таса идеала...
Халь кĕретлĕх питлесрен пит хăрĕç —
чĕтрĕç,
пытанса шалтан шала...
«Чим,
камсем вĕсем?!» — ыйтсан пĕр саслăн,
вăхăт питлĕ:
Çĕн ылмашмăшсем!
Хупăнĕç,
вĕсем влаçра тăрсассăн,
пурнăçри мĕнпур ирĕклĕхсем...
— Қалăр: мĕнлерех малашлă пулĕç
халăхсем,
этемлĕх,
çĕр,
тӳпе?
Тархаслар-им: «НООСФЕРА,
ПУЛАШ —
ПĔТĔÇТЕР ПИРЕ ЫР ТĔЛЛЕВПЕ?!»

...Вĕçленсе пырать тар-шурлă ĕмĕр,
вăл ансух çынсемшĕн çех ансат:
ун вăхăтĕнче пулман тееймĕр
чĕр синкер,
чĕр мăшкăл,
чĕр асап...
Пур чĕр тамăк евĕр тĕксĕмьенĕ
пирĕн саманан та —
пур,
çук мар!
Тӳпери хĕвел те тĕксĕмленнĕ
мăн мăчавăрсем тусан кавар.
Вĕскĕртсен изуверла хаяррăн
çын ассийĕсен йышне вĕсем,
ӳкеймен хĕвел çути йăр- яррăн
чĕр тамăксене чылай çулсем...

Узурпатор,
пусмăрçă диктатор
е хурах фашист урса кайсан,
çутăен чуна епле чăттартăр:
ирĕксĕрлĕх вилĕмпе пĕр тан.
Вилĕмрен те хăрушши вăл — намăс,
этемсем этем ятне яни.
Ĕмĕр-ĕмĕр хĕн курса пурнаймĕç
халăхсем:
юта пуç тайăн-и?!
...Пÿлĕм — ансăр,
çĕр-çанталăк — тăвăр.
Тапранать МИР МАРШĔ мансăр ак.
Пурнăçăм иртсе пырать пит хăвăрт,
кайăп-шим тĕнче курмасăрах?!.

Ĕмĕт-шухăшăм,
ытла ан хĕтĕрт,
пурнăçлаймăп пĕтĕмпех сана:
хĕсĕке юлсан этем те хĕсĕр,
пусăхлаймăн юрламан чуна.
Тертлĕ ĕмĕр!..
Ухмаха та ерĕн —
чăнлăх уçăлать трагедилле...
Асаплан,
çун,
тĕмсĕл,
тарăх,
йĕрĕн
е — питле,
е — тӳррĕн хӳтĕле.
Çуталсам,
кунçулăн тĕксĕмьенĕ,
чунлăх шевлипе те çиçĕмпе —
тен,
хура чăтлăхсене сĕмленĕ
çутăен çынни çĕн сисĕмпе...

Тӳсӗм çук!
Пусарчӗ,
пăталарӗ
тыткăнӗ çӗр туртăмӗн мана,
урана тавра çулпа тăлларӗ,
çакайман мăйран шăнкрав кăна...
Ак чи тăванни те, чи хакли те
йăлăхтарӗ —
мӗн тӗмсӗлтерет?!
Тилмӗрсе чӗнсен мана кам илтӗ?
«Халăх, эс ăçта?!» теме черет.
Çын вӗркешнӗ май ăшри вӗркев те
тăвăллăн тăвăнтарас пекех.
Ķам халь ырлăх пирӗн евӗр кӗтӗ?
Шанăç та çултан-çул пӗчӗкрех...

Чурăс чарусен чури туман-и
пирĕн тивĕçрен те сых ятне
«тимлĕхлĕ» çулсем!..
Хăçан-ши манĕ
çав чура кив хăнăхусене?!
Эп ăна ăшран сурса кăлартăм —
тек ан пусмăрлайтăр кăмăла,
çын еккин пур енĕ янкăрлантăр —
йăлт
чуна уçса
каламалла!
...Юлчĕ пек хыçра этемлĕх çулĕ —
утрăм пек ун тăрăх çĕнĕрен:
чун вĕçевĕ тӳперен те çӳллĕ,
тамăк — пурнăç тĕксĕмьенĕ,
тен?..

Юл,
çĕрте çĕрме çуралнă ӳтĕм,
çĕр те пĕр нушаллă çĕр çинче,—
саншăн ĕç тăва-тăвах-çке йӳтĕн
тăвăр çĕр-çанталăк ункинче.
Вĕçĕмсĕр тăрант та,
тумлантар та,
ăшăт та кил хӳттинче сана,
кĕрт вĕри мунча!..
Хе, тупнă тарçă!
Чир-чĕр çыпçăнсассăн — тӳс кăна!
Çамрăк чух артак та шеплĕх кирлĕ,
çуллансан — çителĕк,
хăт,
хваттер...
Упрансан та пурпĕрех çĕр илĕ
е рехетленсен те çав хатер.

Тум тесен — хитре те чаплă пултăр,
тутлă та нумай — апат тесен.
Ав — кўпе кайни:
кўпшек,
тăлпусăр...
Чун,
çакна курсан,
епле тўсен?!
Теприсен ўтне çу тапса тулнă
кăвăрăлнă пуç мими таран —
чун валли те юлайман,
те юлнă
вырăн çав ўтре?
Пăхма хăран.
Кур:
арçын текен те шампаланнă,
арçынла хĕрарăм та çук мар...
Чун тесен,
пур мăшкăл шăпăрланĕ,
май тупсан — çиет ăна вăр-вар...

Юл,
çĕрте çĕрме çуралнă ӳтĕм,
çĕр те пĕр нушаллă çĕр çинче.
Эп —
        ăслайлă чун —
                        . тупайрăм йӳтĕм
ирĕклĕн вĕçме:
чĕнет тĕнче.
Ҫирлĕ мар мана ракета вăйĕ
ахăрса çĕр туртăмне çĕнме —
çутăран та хăвăртрах тăвайĕ
чунлантарнă шухăш хевтеме.
Вĕçсĕрлĕх те,
                вăхăт та,
                        пĕлӳ те,
                вăрттăнлăх та
парăнĕ мана,
çут тĕнчен «материленнĕ ӳчĕ»
тыткăнлаймĕ — тухмĕ тăшмана...

Вирлĕн виркĕн,
чунлантарнă шухăш,
çут тĕнчен çын çитеймен енне!
Тинкерӳллĕн сăнаса та шу кăшт,
тĕл пулсассăн çăлтăр пуххине.
Ун тавра эсваскамасăр çаврăн,
тимлĕн тĕрĕсле:
«Ку — хăш тĕнче?»
Чĕрĕлĕх палли курсассăн — чарăн,
тĕлĕнтермĕш тĕлĕшне тĕпче.
Астăнлă чĕрчун тупсан, ан шуйхăн,
чунлине туймасăр ан çывхар:
чунсăр сивĕ ăстăн вăл е суйкăн,
е час-час тăвать хура кавар...

Чунлантарнӑ шухӑш тӑнсӑрланмӗ —
манмӗ ырӑпа хура-шура,
пулӗ те ҫӗр ҫыннисен саламӗ
ҫавӑрӑнӗ ҫут тӗнче тавра.
...Виркӗнеп ак —
ӳтсӗр,
кӳлепесӗр —
ирӗклӗ тӗнче уҫлӑхӗнче!
Хӑвалать мана темскер лӳпперрӗн —
вӗтелесшӗн вут сӑннипеле.
Тӗлӗнетӗп: ним тивеймискер эп!
Чӑн та,
ҫутӑран эп хӑвӑртрах!
Чи вӗри хӗвел варне те кӗрӗп.
Маншӑн халь самант шӑвать вӑрах.

Çук нимле чару та чикĕ маншăн —
çут тĕнчемĕр ăстăнне шырас.
Пушăлăх сивви,
тархасшăн, ан шăнт,
пул ютшăнуран кăшт ăшăрах.
Ăрăмçă е турă пулмасассăн,
аслă ăстăн тĕнчере пурах —
унсăр пулĕччĕ хăй вăл масасăр,
мĕн пурри тĕп пулĕччĕ умрах.
Çын çав аслă ăстăн хушнине те
тавлăн итлеме вĕренĕ,
тен?
Ун чухне тин вĕççĕрлĕх инçечĕ
сиввĕн,
тимлĕн ютшăнмĕ пиртен...

Хăш таран халь кураять çын куçĕ
вĕççĕр-хĕрсĕр çут тĕнчемĕрс,
сăнĕ те ун çав таран çех уçă,
курăнми енсем — сĕм-тĕттĕмре.
Эй,
пĕр чĕрĕ чун вĕçсе килинччĕ
уçлăх катинчен!
Хăть пĕр хыпар!
...Тем те,
тем те сăнлаять пулин те,
шухăш вăйĕн те чикки çук мар.
Пурпĕр хăвалать татти-сыпписĕр
шухăшне таçта та пуç мими —
ик тĕнче пĕр-пĕринчен ан пистĕр
тенĕ пек...
Пар хăлăх,
ăс çемми!!

...Тунсăхпа йăлт кавсăхрăм —
васкатăп
чĕрĕлĕхлĕ,
ҫынлă
ҫĕр енне.
Сĕмлĕхрен вĕҫсе тухаҫҫĕ капăрт
сехметле темсем ҫине-ҫине.
Те чи ҫивĕч сисĕмлĕ локатор
шухăша та йĕрлеме пĕлет?!
Уҫлăх хĕҫпăшалĕ ҫулăхать-тĕр —
лазерлă туппisемпе тĕллет!
Шухăш ним тивеймискер пулсассăн —
вăрт кăна куҫас хӳтĕлĕхе
ӳтсĕр,
кӳлепесĕр,
йĕрсĕр,
тĕссĕр,
упранса юлас хăть халлĕхе...

Çук пулас халь хӳтĕлĕх ниçта та —
çук вăл çĕр çинче,
çук тӳпере.
Виртлĕ çутă пайăрки чăрт! татĕ
пурнăçа та...
Çăлăнăç — пĕрре:
тĕп тăвар —
хăт-имĕ çук пулсан та —
пĕр пулса мĕнпур хĕçпăшала!
Тĕнчери лару-тăру юсантăр —
кайтăр ырралла та ăшшалла.
Ан йĕрлейтĕр вилĕмле хăрушлăх
ĕçлекен çынпа чĕрĕлĕхе,
ахăрсамана та талхăруллăн
ан татайтăр пиллĕ пĕрлĕхе.

...Ах,
епле çăралнă атмосфера! —
вараланнă вăл темпе те халь.
Тен,
вăл çĕр тӳпин ӳпки-пĕверĕ?
Тен,
вăл пулăшусăр антăхать?!
Çĕкленет кĕл-хăрăм,
тĕтĕм-сĕрĕм
çĕр енчен пĕр вĕçĕм унталла...
Малашне мĕн курăн-ши эс,
çĕрĕм?!
Пăхăнман-ши пурнăç усала?!
...Эп вĕçевçĕ шухăш-и е чун-и?
Тĕлĕк-и ку,
чăн-и?
Кам пĕлет...
Аялта мĕскер пурри йăлт çуннăн,
сĕмлĕх çĕр сăнне карса илет.

...Турĕ мар-и ăрăмлă поэзи
виç терменлĕ сыхчă-çын манран?
Тен,
сăпай пулмарĕ элчĕ ĕçĕ
уçлăх чĕлхине чухлайманран...
Çăлтăр плазминче çунмасăр ишрĕм,
утрăм ют планетăсем çинче,
вĕçрĕм сĕмлĕхре...
Таçта та илтрĕм
пĕр чĕнӳ — вăл вĕçрĕ çĕр енчен.
Ак çиет куçа çӳльенĕн кĕлĕ —
Чернобылĕн-ши,
сĕн вăрçăн-ши?!
Çĕр енне çывхарнăçем —
вăл хĕмлĕ —
кӳ[illegible]! килет темсен усал шăрши.

— Пӳлĕхçĕм,
çынсен çĕрне мĕн пулнă?!
Хыпарла: мĕн пулнă çынсене?!
Океан хĕрри — тюлень,
кит,
пулă:
мĕн мĕнле тĕп тунă вĕсене?!
Пĕр енче — вăрман çунать хăрушшăн,
çумăрсемсĕр çунăхнă уй-хир.
Çайăксем вĕçетчĕç умлăн-хыçлăн —
пат! та пат! ӳкеççĕ...
Чир!
Чир!
Чир!
Тепĕр ен йăлт ушахланнă евĕр:
ейӳленнĕ юханшыв-ши вăл?
Чĕрĕлĕх те,
çын та — йăлт хӳтевсĕр:
ӳсĕнет-шим аркатуллă вăй?!

Наркӑмӑшлӑ имҫамсем чирлетнӗ
чӗрӗ ҫутҫанталӑка хӑйне,
вӑрлӑх тӗввине те «химилетнӗ»,
тытӑмне пӑсса,
ярса хӗне...
Ҫут тӗнче хальччен курман тискерлӗх
сусӑрланӑ чух этем йӑхне
йывӑр упрама тӗрӗс-тӗкеллӗн
чи тӑваннине,
чи хаклине.
Ҫам хальхи пӳртен* —
алхимик мар-и,
нӗрсӗр вилӗм хатӗрӗн ӑсти?
Ун алли тивмен ген,
тен,
юлмарӗ...
Вӑрттӑн вӑрҫӑ халь те пымасть-и?!

---

* ҫутҫанталӑк е «тӗшмӗш» тӗнӗнчи чир-чӗр саракан усал

Тен,
чăнах тĕнче пĕтме пуçланă?!
Тен,
этемлĕх тайăлать ăсран?!
Тен,
чĕрри-чунли йăлтах пăчланĕ
паян мар пулсан — часах,
ыран?!
«Ултă талăкра çех ăрăмланă»
тĕнчене, мĕн, хĕн-и тĕп тума?!.
Ахăрсамана,
тен,
вăрăмланĕ
кăниччен кăшт иртĕхсе юлма...
Çавăнпах çĕре кисрентерет,
тен,
турă сăнлă усалсен ташши?
Йĕрĕхсем ылмашнă май черетĕн
эс,
поэт,
ан кĕвĕç ытлашши...

— «Вайли çук та...» тенине хушаттăн,
вĕрентӳçĕ,
пуçăмра тытма,
те кунçул,

                    те киремет,

                                        · те шатăн*

вăрттăн сăнсăрлаççĕ асăма?
Çук татулăх,
шухăшсем те çуйлă —
ӳстерет каç туйăм шиклĕхне:
вилĕм туйĕ чӳк тума мĕн суйлĕ?
Пурнăç вăйĕ çĕнĕ-и хĕне?..
Қам çак пиллĕ тĕнчене çуралнă
чи усал вăйсен хурри пулма?!
Мĕншĕн çын хăй ăшĕнчи чураллă?!
Мĕншĕн вăл пуçлать выльăхланма?!.

* юмахри тĕксĕм вăй, усал

Чим,
кама эп айванла хăясшăн
питлеме е намăслантарма?
Мĕн çĕр,
шыв,
илем те
чун
каяшшăн! —
çын асси пĕлет-и вăтанма?
Ейĕве ярăннисем алхасĕç,
ташлĕç чĕтренсе шуйттан ташши —
ăш çунăкĕнчен йăлт хăтăлас ĕç
пулмĕ халь никамшăн ытлашши...
Ĕмĕт татăлни те,
ютшăну та,
ахăру та пушатсан чунне,
çын ачи —
куçне тин уçнăн —
утĕ
çутçанталăк тĕкĕрĕ умне...

Кӳтсе ҫитнӗ чун сасартӑк илтӗ
ҫил,
ҫӑл,
ҫутӑ ҫулҫӑ
сассине.
Ҫын хӑй пӑшӑлтатӗ: .
Эп те килтӗм —
пар,
ыр ҫутҫанталӑк,
сиплӗхне . . . . . .
. . . . . . . . .
. . . . . . . . .
Тен,
тӳрех каҫармӗ пурнӑҫ амӑш
аскӑн ывӑлне,
шашур хӗрне . . . . .
Ачисем те ун тек курнӑҫланмӗҫ,
ӳпкелемӗҫ шутсӑр пӗр-пӗрне . . .

«Эй, кунеçтерсех пурăнаясчĕ!» —
тетпĕр çын екки майлашнă чух.
Килĕшӳ — чи ырă шанăç ячĕ.
унсăр çĕр çыннин малашĕ çук.
Намăссăрлăх,
йĕрĕнчĕк хăртсан та
çав чи ырă шанăç йăлт сӳнмест,
çăтаймасть ун çăлтăрне сехмет...
Тĕксĕм каç та катанах ăсанчĕ.
...Шуçăм кăн-кăвак чухне ĕненмĕн
ахăрсамана пуçланасса.
Çĕр йĕри-таврах вĕçме чĕнет-мĕн
шухăша тӳпе,
тăнăçланса.
Сар хĕвел ăшши çуратнă çил-ши
тăрăшса уяртрĕ çак ире?
Хĕпĕртесчĕ ман çӳльен уççишĕн —
чун туртми пулать ӳт çук çĕре...

Çăлтăрсен вăрçи пуçланиччен эп ёлкĕрĕп,
тен,
сÿннине чĕртме —
ывăна пĕлмесĕр чĕнĕп,
чĕнĕп
вилĕм хатĕрне çĕртех çĕртме.
Аркатуçăпа-и танлашайĕ
ăрăмçă тĕнче пăтраннă чух?
Ут,
поэт,
чунлисемпе пĕр шайăн —
аслă çĕнетÿ ĕçне эс тух.
Çынсемпе пĕрле чух эс йыш вăйлăш,
халăх вăйлăш пĕрлĕхлĕ ĕçре,
пулăн,
тен,
мĕнпур этемлĕх вăйлăш
хĕçпăшалсăрлантарсан çĕре.

Йӳтенсе пурӑнайми пулман-и
куҫлӑ,
чунлӑ,
ӑстӑнлӑ ҫынсем? —
мӗскӗнле чураланмашкӑн маннӑ
чи тискер вӑй умӗн те вӗсем.
Атомлӑ карап ҫулне пӳлесшӗн
чӑрсӑр пулӑҫ япӑх киммипе.
Ют ҫар базине хирме пӗрлешнӗ —
кӗрешет хӗр-ар чун тимлипе.
Йышланать,
вӑйлӑланать МИР МАРШӖ —
ҫаврӑнасшӑн ҫӗр йӗри-тавра.
Йӳнлӗрех пулма пуҫлатпӑр мар-ши
вӑхӑт хӑрушланнине кура?

...Вĕçленсе пырать тар-шурлă ĕмĕр.
Ĉăткăс тĕнчери лару-тăру.
Ĉилĕшӳ те ӳсĕнчех теейĕмĕр —
пур каварлăх,
тĕрлĕ тавăру...
Халь те вăрçăсăр иртмест пĕр кун та
çурăлса каяс пек çĕр çинче,
е диктатор,
 е тиран,
 е хунта
тилĕрет-ха пусмăр пур енте.
Мулçăн тара кĕрĕшнĕ хурахĕ —
сутăнчăк,
ансух усал-тĕсел —
çур этемлĕхе персе пăрахĕ,
май тупсан е килтерсен мехел...

Ак вĕр-çĕнĕ хĕçпăшал туяннă
нефть тата темтепĕр сутакан,
ак вĕчешмелли сăлтав та янтă —
тĕн вăрçи пуçлаççĕ шахпа хан.
Ак вĕçет ракета —
яче ютăн —
ыйăхри пепке сăпки çине...
Эй,
çўлтен-çўлти,
татах-çке юлтăн
сисеймесĕр туй-çуй тухнине?..
Хуçисем,
тен,
урăх «пĕчĕк вăрçăн»?
Тен,
тĕнче тытакансен алли
йўтĕм хатĕрлет чеен те вăрттăн
виççĕмĕш тĕнче вăрçи валли?!

...Ыйăхсăр каçсен çăлтăрĕпе
сыхлăн канашланнă пек калаçрăм,
вăл çунса çывхарнă май çĕрпе
куç хупмасăр пĕрре мар çĕр каçрăм:
çыхăнтарнă-çке ĕлĕкренпех
ун ятне вăрçăсемпе этемлĕх, —
сăнĕ ун чăнах синкерлĕ пек,
пур сăлтав хĕн хыпарçи темелĕх.
Ав —
хĕремесленнĕ те тĕнтет
вăл —
хурав хыпарĕ евĕр! —
хурлăн:
систермест-ши ăстăнлă тĕнче
хăйĕн ирĕкне унпа салхуллăн?!

Қам пĕлет...
Этемлĕх тетпĕр те,
хăй те вăл арпашăнчăк-арканчăк —
халь те килĕшӳллĕ мар пĕртте,
çук ун пĕр тĕллев,
çук пек ыр шанчăк...
Уçлăх ирĕкне-и,
                    вăл хăйне
халлĕхе тăнла пĕлмест-ха тимлĕн—
ăншăрт чирĕнчен ăна кам имлĕ,
кам сиплейĕ ун çĕр чăмăрне?
...Мĕн халь авалхи мифсен палли!
Çын хăй тӳпине хăех çĕклесшĕн:
чи тараватли,
чи сăпайли
мир фондне перекетне пиллесшĕн.

Пăлханусăр пурăнаймĕç урăх
куçлă,
чунлă,
ăстăнлă çынсем:
кирлĕ —
чăн та —
улăпла сатурлăх
вăрçа хирĕç кĕрешме чĕнсен.
Тăнă вăя хирĕç вăй — армада
çĕр çинче,
шывра,
тӳпе енче.
Кунĕн-çĕрĕн сыхăра тăма та
йывăр пуль: пĕр чунлă мар тĕнче...
Ахăрсамана мĕлки-синкерĕ
çавăнпа тĕнче касса çӳрет.
Ăстăн,
тимлĕ пул!
Куç,
пул тинкерлĕ!
Чун,
килĕштерӳ тупма вĕрент.

— Хĕçпăшалсăрланмалла! —
тет тӳррĕн,
синкерленнĕ вăхăт чан çапсан,
çирĕп миршĕн,
аслă çĕнетӳшĕн,
çĕнĕ шухăшлавшăн тăракан.
Ĕççынни,
политик,
шухăшлавçă,
космонавт,
архимандрит,
поэт —
пурте вăхăт таппине туяççĕ:
вăл хастар пулма малаш пиллет.
Халăх дипломатийĕн хăвачĕ
çĕнтĕр ютшăну сивлеклĕхне:
çыхăну кĕперĕсем хываççĕ
усăлăх урлă —
курăр! —
ку чухне.

Тĕрлĕ континент,
çĕршыв,
çын,
халăх
пĕр-пĕрне шанма вĕренĕ те
мул,
вăй,
влаç
каварлăхĕ çухалĕ
Манăçлăхăн тĕксĕмьенĕнче.
М и р  ч ĕ л х и тупайĕ ырă кăмăл
килĕшӳ сĕтелĕ хушшинче —
вăрçă пуçласа яма пĕр çăмăл
юлмĕ тӳлекленнĕ çĕр çинче.
Уççăн тĕп тума пуçларĕç —
курăр! —
вăрçăн чи хăрушă хатĕрне!
Эй,
этемлĕх,
саншăн ĕмĕрне
çак ĕçрен ырри пулман-тăр урăх!

Çывăх вăхăтрах —
часах! —
тĕп пулĕ
пин ракета çĕрĕн ик енче!
Анланса илейрĕмĕр-ши путлĕ
мĕн пуçланнине çак кунсенче?
«Мĕн вăл пин ракета шутсăр вăйшăн —
мĕн пуррин пĕр пĕчĕк пайĕ çех!» —
тет ăспуç,
чун евитлет йăвашшăн:
«Майĕпен тĕп тăвăнĕ веçех...»
Питĕ ĕненес килет-çке пирĕн
çĕр йăлт хĕçпăшалсăрланасса:
пурăнасчĕ харкашусăр —
мирлĕн! —
юнлă вăрçă мĕскерне манса.
. . . . . . . . . .
. . . . . . . . . .
Вăхăт чĕнĕвĕн вăйне туйса,
тăнăçлă пуласлăха васкатăр
çĕнетӳ карапĕ — Çĕр!
Ласкатăр,
пурнăç парăсне çил çех савса.

# ХĔВЕЛ ТАШШИ

## Асамлă асаилӳ



●

...шăп çакăн евĕр самантра вăраннă пуль тĕнче

çурхи çӳçенчĕк варкăшне хускатнă май çанталăк
çĕр чĕрĕлĕх сĕтекĕнчи ыр шăршсене сарать
каç уçă сывлăш сиплĕхне çăтса ĕшеннĕ тейĕн...

...шăп çакăн евĕр самантра чунланнă пуль тĕнче

●

...автан хӳри пек тухăçăн тĕк-мамăкĕ çинче
сип-симĕс хĕмлĕ çăлтăрсем шупкаланса чĕтреççĕ

ак йĕс çăварлă пăхăр пырлă вăхăт хыпарçи
шарлаттарса авăтнă май пыл шăранать ăша...

...вара тăнлавсенчи шава итлет пек шиклĕ шăплăх
...шăп çакăн евĕр самантра çуталнă пуль тĕнче

●

кĕтмен çĕртен çинçен хуллен чăнкăртатса илсе
сасартăк виç хут янн! янн! янн! хыпар ярса кĕскен
ял чанĕ янравне татать чĕлхи чулланнă евĕр

витлевлĕ ахрăм çех чуна çӳçентерсе салхуллăн
çавра инçет пушлăхĕнче аташнă пек сӳнет...

●

ак шыв вăкри пек мĕкĕрме пуçлать
чунлатнă шăпăр
ак чĕнкĕл-ченкĕл хăнкăрмаллă уçă параппан
тĕнче таппин тĕп кĕввине шырать кĕмсĕртетсе...

●

...урам тăваткалне тухать чĕнӳçĕ хăпăл-хапăл
ун хыççăн — пĕлĕмçĕ текен ялти ят-сумлă çын
шĕл-кăварне кăвакартать йăла-йĕрке чӳлмекĕ

...ак мăнаçланнă ăрăмçă сĕм авалхи пекех
пĕртемлĕн ухăтма* пуçлать пире мĕнпур чиртен...
ура тапса юрла пуçлать хăй юррине чĕнӳçĕ:

Хĕле çĕнчĕ çуркунне,
Хыврĕ çĕрĕн юр тумне.
Тух, яш-кĕрĕм, ир енне
Тип çеремлĕ çĕр çине!

Чĕнет пире уй-анне
Çĕн чĕрĕлӳ уявне.
Паян, ăшша тайăлса,
Хĕвел тухать ташласа!

Эй, яш-кĕрĕм, сăрт çине —
Çавра вăйă картине!
Ташша тухан хĕвеле
Пирĕн кĕтсе илмелле.

---

* сăмахпа сиплеме

...ак шăпăр ахăрать ак ӳхĕрет
сасси вĕççĕрлĕхрен тĕпсĕрлĕхе ӳкет
...кив ĕмĕрсен асамĕ çывхарать
чĕнӳçĕ те минрес пек çухăрать:

— Э-эй, мăчавăр, тăр тĕпе —
Ертсе кай çӳле, сăрта!
Çăлтăр хĕмĕ пар, тӳпе, —
Чĕрттĕр çĕр çинчи вута.

— Тух вут умне, тĕлĕркке, —
Çавăрар сĕм ĕлĕке!

— Уç, уç, шурăмпуç,
Ќата карти хапхине —
Ќуртăр, куртăр пирĕн куç
Аслă хĕвел ташшине.

— Мерекке, мелле мĕлке —
Мĕкĕл-мекĕл мĕшĕлкке...

●

сарă хĕрсем юрласа хĕвеле май утаççĕ
вăйă карти çавраççĕ
хура хĕрсен картине хупăрлама пуçлаççĕ
хутлă карта тăваççĕ

хастар каччă-йĕкĕтсем хĕвеле хирĕç утаççĕ
сарă-хура хĕрсене
пĕрлештерме пуçлаççĕ
аслă карта тăваççĕ

пĕр картара чĕнӳçĕ
вăлах ăста кĕвĕçĕ
тепĕринче ертӳçĕ
вăлах ăста кĕлевçĕ*...

●

(...вăхăт пуçланман самант та пулнă тейĕн —
асаилӳ асамĕ ӳкерĕнет татах...)

. . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . .

●

...хĕрсем аслă карта варне юлатчĕç те
хĕвеле май утса юрлатчĕç:

* жрец

Хӗвел ҫинче ӳснӗрен
Сарӑ хӗрсем пултӑмӑр.
Хӗве хупма пӳрнӗрен
Сахӑр тутлӑш пултӑмӑр.

Ҫамрӑк хӗрсем — ҫӗр ҫырли,
Яш хӗр — чие, чи хӗрли,
Пӗве ҫитни — пӗрлӗхен,
Ҫитӗннӗ хӗр — хурлӑхан...

●

каччӑсем хӗрсене ырлатчӗҫ
хӗвеле хирӗҫ утса юрлатчӗҫ:

Хӗвел витӗр пӑхнӑран
Ҫӑйкӑр куҫлӑ пултӑмӑр,
Сахӑр тутлӑш хӗр курсан
Ҫӑкӑр ҫапса пытӑмӑр.

Чипер ывӑл, чие тат,
Пӗрлӗхенне, пилли, тат,
Хурлӑханне, хури, тат,
Ҫӗр ҫырлине, сарри, тат.

Ҫӗҫӗн ывӑл читтӗкли*,
Унӑн ҫырли чи тутли...

---

* сафьян атӑлли

●

карта варне кăвайт чĕртме
пĕлĕмçĕ хĕвел амăшпе хĕвел ашшĕне чĕнетчĕ:

Хĕвелçаврăнăш,
Хĕвел амăш,
Хĕмленсе тухсам умма —
Хĕлхемне пар вут хума!

(хĕвел амăш хĕвеле ункай ташласа тухатчĕ те
чĕнӳçĕ аллинчи кăвар чӳлмекне
çаврака кăвайт варне пырса лартатчĕ)

Хĕвел ашшĕ
Хăватлах-ши? —
Çуталса тухсам умма —
Çулăмна пар вут пулма!

(хĕвел ашшĕ хĕвеле хирĕç ташласа тухатчĕ те
чӳлмекри кăвара çаврака кăвайт варне тăкатчĕ)

●

...хутлă картасем —
пĕри хĕвеле май тепри хĕвеле хирĕç —
çаврăна-çаврăна ылмашăнатчĕç те
çĕрпе хĕвел сăнарĕсем пулса тăратчĕç
...хĕвел амăшпе хĕвел ашшĕ юрла-юрла ташлатчĕç:

Чуп-чуп каçĕ
Чун валли,
Чултан кăвар тумалли...

Ирĕк ирĕ —
Им-сумли —
Ирĕлтерсе ямалли...

Савăк кунсем
Сан валли,
Савса хĕвел çутмалли...

●

...хĕвел амăшпе хĕвел ашшĕ кăвайт чĕртетчĕç
картасем хăвăрт çаврăнса кăвайт тавра пĕрĕнетчĕç
хĕвел амăшпе хĕвел ашшĕне хупăрласа илетчĕç
. . . . . . . . . . . .

картасем сарăлма пуçланă май
вутран Хĕвелпи хĕмленсе-çулăмланса тухатчĕ
çапла юрласа ташлатчĕ:

Хĕвел хĕрĕ хитре хĕр,
Хĕпĕртесен хĕрелет,
Хĕрелет те хĕмленет.

Хĕвел хĕрĕ хитре хĕр,
Хĕрхен тесен кӳренет,
Кӳренет те... хĕрхенет...

●

...сăрт хыçĕнчен мăкăрăлса тухакан хĕвел
çаврака кăвайтăн çулăмĕпе танлашатчĕ те
хĕвел ташшин вăййи кĕрлесе каятчĕ
хĕвел чĕре пекех кăлт-кăлт! тапнăн туйăнатчĕ

...хĕвел карти çаврăнатчĕ çаврăнатчĕ çаврăнатчĕ
кăвайт карти
пурçăн тутăрсемпе хăюсенчен çулăм евĕрĕ туса
ташлатчĕ ташлатчĕ ташлатчĕ...

●

йĕкĕтлĕх вăй-хавалне туйса илнĕ çамрăксем
çулăм ăрши витĕр хĕвел еннелле пăха-пăха
вут урлă сикме тытăнатчĕç . . . .
. . . . . . . . . . .

хĕр карти Хĕвелпие пуç тая-тая юрлатчĕ:

Çак çур вăййи кăвайтлă,
Çӳлти-çĕрти хĕвеллĕ,
Ăшши вĕсен хăватлă,
Эпир икшер хевтеллĕ.

Кăвайт вучĕ кăварлă,
Çулăмĕсем çунатлă,
Тĕтĕмĕсем кăваклă...
Сиксе каçсан чун латлă.

Çулăм урлă çулсăр каç!
Хĕвел урлă хĕнсĕр каç!
Кăвар çинче ташлакан
Çухатнине тупакан...

●

...ак хайхи
юмах чăн пулса тăнă пек
кăвайт çулăмĕ те хĕвел те сăрт-ту та
яш-кĕрĕм те пурте пурте пурте
ташша çапнă пекчĕ...

такмак та такăнмастчĕ:

Пирĕн хĕвел ураллă —
Вĕçме-утма çуралнă:
Утти çăмăл, илемлĕ,
Ташши вăр-вар хĕлхемлĕ.

Пирĕн хĕвел çунатлă,
Çуначĕсем ынатлă —
Ăшă кӳме таврăннă,
Ăша кĕме çаврăннă...

●

...ку пирĕн таврари чăвашсен пĕртен-пĕр
ирхи ваййиччĕ пулас
маншăн вăл асар-писер асилӳ кăна марччĕ
истори чăтлăхĕсенчен çурхи çутлăха тухнă
тĕлĕнтермĕшехчĕ
библи саманичченхи асамлă аваллăх
хăй çинчен çапла ытарлăн
шухăшлаттармастчĕ-ши теттĕм...

кивеле пĕлми килĕшӳллĕ кĕвĕсем те
ютшăнми юрă-çемĕсем те
юмахлана пуçланă йăла-йĕркесен илемĕ те
пурнăçăн ĕмĕрхи техĕмĕсем мар-ши теттĕм...

●

...ав хĕрсем
аллисенчи хĕвел евĕрлĕ çаврака хăмачпа
çунса пĕтнĕ кăвайта хуплаççĕ те
хĕвел сăнарĕпе ун тĕслĕ кăвара
чӳлмеке пуçтарса чикеççĕ...

...çакăн евĕр самантра халăхăмăр юрăпа
çĕре ĕмĕр-ĕмĕр савăнтарма пикеннĕ чухнехиллех
хĕвелĕмĕре те юрăпа е сăвăпа савăнтарасчĕ теттĕмĕр:

Ялкăш, çиç, тĕнче çути — хĕвел,
Тĕттĕм касăн ыйăхне çĕнсе!
Ташласа тухса умра хĕрел,
Çĕн кун ырлăхне пире чĕнсе!

Хĕпĕртӳллĕ аслă уявра
Хĕвелпе эпир пĕр картара!

Ялкăш, çиç, тĕнче ăшши — хĕвел,
Чĕрт, ешĕллентер, сипле çĕре!
Нихăçан ан сӳн — çун, ан кивел,
Вĕççĕр пурнăç парнеле пире!

Хĕпĕртӳллĕ аслă уявра
Хĕвелпе эпир пĕр картара!

Ялкăш, çиç, тĕнче сыхчи — хĕвел,
Ĕмĕрхи ытарлă çаврăмра!
Вутлă тăвăлпа хура элчел
Ан асайччăр пирĕн таврара!

Хĕпĕртӳллĕ аслă уявра
Хĕвелпе эпир пĕр картара!

# ЧЁНӐ ЧАНĔ

## Публицистикăллă поэма



Мана пĕр сатурланнă çын иленчĕ —
чĕнет,
хистет вăл тĕл пулмассерен:
«Завод — ĕç храмĕ пек халь!
Çĕнĕленчĕ! —
кĕр-ха,
ун умĕпех иртсе çӳрен...»
Шăнкравласа чĕнет, —
пит тĕллĕ тет-мĕн, —
чĕнет илемлĕ уçă сырупа:
«Пырсам!
Тен,
курăн чăн-чăн тĕлĕнтермĕш
е тупăн çĕн сăнарлăх çĕн шăпа.
Ҫирлех пулсан,
йыхрав ярса паратпăр,
Ертсе çӳрекенсем те пулĕç сан...»

«Ку шыравçа шăл чирĕ сапăрлаттăр!»
теме те хатĕр,
кăмăла хуçсан...

Чим,
кам вăл?
Йĕплĕ йĕкĕлтевçĕ темĕн:
пур ун хальхи вăй-хавалпа вăй-хал.
Çапах çакна тӳрех пĕлсе çитеймĕн:
мĕн тăвĕ заводра манпа вăл халь?
Ыр суннă евĕр пĕлĕш,
тантăш евĕр,
çав хушăрах этепсĕр пек кăштах.
Те айванла асăрханас:
«Ан шĕвĕрт!»
Те кăмăл еккине ярас лăштах?
...Мĕнех,
иккĕленсе сӳрĕкленмешкĕн
сăлтав çук мар:
шăп чун черчен чухне
тем чухлĕ кӳтнĕ черетре эп,
мĕскĕн,
кунçул чĕнсен ĕç кадрĕсен пайне.

Хĕсметçĕ пӳлĕх тарçилле тӳрккесчĕ —
куç хӳрипе ун-кун пăхса илсех
çынна вăл кăмăллатчĕ е тиркетчĕ,
çăвар уçсан — ан курăн та текех.
Тӳпен тĕрек юпийĕ евĕр меллĕн
мĕлке ярсан завод мăрйи ума,
гудок та хуравлатчĕ пек кĕрмеклĕн:
«Эс тивĕç мар гегемона тухма!»
Çӳлте-ши е шалта-ши,

эрленеттĕм,
тытать çын шăписен пайне тĕнче?
...Çĕр чĕрĕлĕх çутинелле чĕнетчĕ,
çĕклетчĕ кăмăла кас хӳттинче.

...Чун туртнă хулана пырса эп кĕтĕм,
вăтаннă кĕлмĕç пек,
шыв хĕррипе.
Ҫĕсъемсенче юлманччĕ кĕлттĕм-кĕлттĕм*
çӳревçĕ пурнăçĕ шĕкĕррипе...
Хӳтти çил вĕриччен çӳхе хаçатăн,
бюст** патĕнчи çеçке пылне ĕмсе,
пĕр «керменте» пит вăрттăн çĕр каçаттăм,
кив лозунгсемпеле пиеленсе.
Ир умĕн:
«Сывă пул лĕх лăх!» —
вулаттăм,
юн витнĕ евĕр пусмана çурса.
...Тасатнă пекчĕ чăпăл-чăпăл Атăл
сăмахăн пурă лĕккине çуса...
Е йăлăм хӳттине салху вут хунă
эпир,
кил-вутсăр юлнă йĕкĕтсем,
йăпатнă аслă юханшывăн хумĕ,
тĕтре пит-куçсене те йĕпетсен...

---

* вак укçа
** Ҫ. В. Ивановăн Атăл хĕрринчи бюсчĕ

Тен,
çавăнпах эп халь артаклă лирик,
ВАПП,
РАПП е ЧАПП* тавраш̆е пекки мар.
Ыр пиллĕ çутçанталăк — манăн ирĕк,
вăл чунлантарнă çын — тăван сăнар.
...Чĕнӳçĕ пĕлĕшпе пуплешĕп ӳлĕм,
халь —
шутсăр шухăш йăсăрне путса,
шыра-шыра ытарлă килĕшӳлĕх —
ачашлăп ăшă туйăмпа ăса.
«Эй,
мĕн вăл юн,
мĕскер вăл хурçă, —
вăлтăп, —
юлать вĕсен те тутăхĕ кăна.
Савса сыхлатăр чăнлăх куçĕ вăрттăн
чуниллисем тĕкĕнейми чуна».

* Пĕтĕм Раççей, Раççей тата Чăваш пролетари писателĕсен ассоциацийĕсем

Çĕн чунлăхра-ши ç ы н л ă х ятлă тупсăм
е интеллект-ши çĕн хăю хӳшши?..
— Чим! —
шĕвĕр пӳрнипе юнать пĕр тусăм, —
ку чух та чӳк шерпечĕ юхĕ-ши?!
Юхать-ха!
Хăтлăх чурисем пит тӗмлĕ —
çĕнни чĕнсен,
сехри хăпать вĕсен:
хăйсем тулли тивлет текен идилли
хăйсене çех рехет кӳрет иккен...
Хальхи евĕрлевçе мĕнпе суптарнă?
Путишшĕн куçăхтарнă пек юри
е хĕтĕртӳçĕ пуш сăмах çаптарнăн —
çаплах «хайлать» ырлавлă попурри...

Мĕн чухлĕ халиччен çукран «пур» тунă,
суйса çĕкленĕ куçкĕрет шайне...
Халь иртнĕ вăхăт айăпне кам тунĕ,
манма хăйса ун тĕрлĕ нушине?!
Кам тўснĕ найкăшмасăр,
пăчланмасăр
ăшри е çĕр çинчи тамăксене,
тўрре тухсан та каппайланмĕ майсăр:
туйма вĕреннĕ пурнăç масине.
...Урокĕсем историйĕн тем тĕрлĕ:
чи хаярри те,
тĕлсĕрри те пур,
ырри кăна сăваплă,
пиллĕ,
тĕплĕ —
тăванăм,
ун çине çут шанăç хур.

Чăвашăм,
пурнăç кăрăсланнă хыççăн
асаплăн асăхсассăн та юрру,
ун-кун е таçталла пăхман эс выççăн,
хăвнах минкетнĕ аяр-аяру...
Çут тĕнчепе пĕр тан тăван чĕлхемĕр
пире ыр кăмăллăх пилле-пилле
калаçăва çемçетнĕ ĕмĕр-ĕмĕр
чи çепĕç уçă сассисемпеле.
Çĕр пăтлă чан кĕрлевĕ пек ылханĕ
сĕвĕрĕлсе путсан тĕмен варне,
ыр чунлă халăх евĕклĕн сыхланă
çĕр пин сăпай сăмахлă словарьне.

Элчелĕ нишлĕ чĕм кĕртмен сăмахăн:
вăл уçаймасть чуна,
çутмасть ăса,
унпа ни ырă,
ни усал сунма хĕн —
эппин,
илтсен те юлмăн астуса.
Пуш-пушă халлĕнех сăвăлансассăн,
кĕвсĕрленсе кĕрсен кĕнекене,
тип хăнкăла пек упранать вăл сассăр,
кĕтсе хăйне чĕртме килекене...
Вара ун малтанхи таса пĕлтерĕш —
хурт мăртăхтарнă евĕр —
иксĕлет.
«Пил сăмахне хăçан çĕн чĕм кĕрттерĕç?!»
тесе асапланни аса килет.

Илем,
чыс,
туйăм,
ёренке те
чăнлăх
чи нёрсёр еверлев кулли пулсан,
этем,
эс çăкăр выраннe тăм чăмлăн,
тăнна тёп тăвăн,
ăнмё шăпу сан.
Тен,
аслăланăн та... текех куç уçмăн,
сём-тёттёмри пек пурнăн йўтенсе...

. . . . . . . . .

. . . . . . . . .

...ирех васкатăп пёлёшпе пёр çумăн
ытарлă «ёç храмне»,
чуна тёнтсе:
«Эс — çёнетў пёлтерўçи» темен-и
мана ыр вулакан çырăвёнче.
Эй-хей,
татах эпё сăмаха ёненнё,
ача пек хавхаланнă!.. Ак тёнче!

«Пуçланчĕ революцилле çĕн тапхăр», —
итлеп,
вулап,
тăнлап куллен-кунах.
Епле тĕллевлĕх!..
Чим,
поэт,
ан талхăр, —
тен,
эс те курăн-ха ăна чăнах.
...Мĕнле хĕмрен тивертĕнсе вăраххăн,
хўтевсĕр тĕлкĕшсе,
амаланса,
çын тахатне,
вăй-хавалне вăратрăн
эс,
çĕнетў туппи,
амак ансан?!
Чи сивĕ сĕмлĕхре те эс вут чĕртрĕн,
сивве çех мар,
тискерлĕхе çĕнсе,
чĕресенче —
шалта! —
упрантăн чĕррĕн,
хăш чух сўнсе ларас пек хĕсĕнсе...

Сӳнсе лармарӑн!
Ҫутрӑн ҫиҫӗм шухӑш —
куҫран — куҫа,
                    чунран —
                              чуна куҫса
тимлентерсессӗн чӗрлӗхлӗ ӑшшу вӑшт —
чӗнӳ пулса хускатрӑн т̆анпуҫа.
...Ялав,
...чап,
...ҫӳллӗ вырӑн,
...ылтӑн ҫӑлтӑр
мӑнаҫлӑн иртӗнсе валеҫнӗ чух
«ахаль ҫын» ним ан тавҫӑрайтӑр,
                              ҫӑктӑр! —
куҫне урӑлтармастчӗ пулӑштух...
...Суйлав,
...йӗркелӗх,
...кӑтарту,
...пахалӑх
пулса тӑрсан синкерлӗ евӗрлев:
— Ҫитет! — шут тытрӗ тем те тӳснӗ халӑх. —
Пур Ленин пилӗсем!
Пур тӗп тӗллев!

Тен,
катаклизм çывхарнă?!.
Ăс уçаймĕ
çынсен ирсĕрлĕхне,
нĕрсĕрлĕхне...
...Чим,
эп татах çĕн тапхăра куçам-и —
ыхлаçлă пурнăç ирĕн ирĕкне.
Чĕнет,
чĕнет,
чĕнет мана хиствлĕн
те вăхăт хыпарçи,
те çĕн элчи?
Чĕрем тӳнккет,
«ĕлкĕрейместĕн!» тенĕн:
кая юлсан юнать кунçул шалчи...
Те шик пусать,
те иккĕленчĕк туйăм
пăшăхтарса пăсасшăн кăмăла?
Умра — капмар завод: вăл — хăйне уйрăм.
Унта —
«ĕç храмĕнче» —
ман пулмалла.

Йăпас эстет калатчĕ: «Пур — тĕп тема:
малти класс ĕçĕ, вăл — мăн цехсенче...»
...Ана алхапăлах кĕрсе тĕпчеймĕн,
хальхи хăвăртлату хĕртсессĕн те.
Мăн крепость пек завод,
хулаш пек — чухлăр:
те инçетрен курсассăн тĕлĕнме
ăна,
чăнах та,
уйăрнă сыхчуллăн
кив йĕплĕ пăралуклă чул хӳме...

. . . . . . . . . .

. . . . . . . . . .

...Штамплана́ «геройсем» —
вĕсем пит танлă! —
унта тĕл пулĕç те çине-çине,
тăнлаймăн шăв-шавран тарса пытаннă
цехри ăслайлă ĕç поэзине.

Тата сив çамкунтан вĕри тар тумлĕ,
сăнарлама пăхсан
тĕпе хурса
телесериалти пек кăтартуллă
ятне ярса йӳнетнĕ пафоса. . . .
. . . . . . . . . . . . . . .
Тӳрккес-ха технократ,
тӳрех сисеймĕ —
те хӳтлĕх ку,
те çын пĕлмен инкек:
ун чун-чĕмне хуплану техсистема,
юри пăчлантарма пикеннĕ пек.
Мĕнле хитре шăпа та тĕлĕнтермĕш
утса иртӳçĕн курăн заводра?
Çак хушăрах йăпанкалап:
— Ан ермĕш,
тытса туптаймĕç-ха,
хĕртсе вутра...

— Ку ҫӗнетӳ йыхравӗн хучӗ, —
терӗ
ман пӗлӗш,
хӗрлӗ пропуск тыттарса, —
в ӑ л чан ҫапман пулсан,
кам-ха чӗнтерӗ
сана ҫак ӗҫ храмне ятарласа?
Йӗплерӗ: — Ҫут тӗнче.
Чӗр ҫутҫанталӑк.
Унта — поэзи,
чун...
Эй, мӗн калас!
Кунта —
подряд,
план,
хуҫрасчет,
ударлӑх...
Халь лирик ҫех пурнать пулас канас?
Ун ӗҫӗ — туйӑм туйӗ,
медитаци,
сӑмах шыравӗ,
сӑвӑ хывасси...
Кунта вара: «Эх, пенсиччен чӑтасчӗ!» —
тесе те илнӗ эпӗ,
йӑх асси...

Чăл-чал пăхса илетĕп утнă майăн:
чечеклĕх,
чул тĕм,
шăнкăрти фонтан.
Цех корпусĕн çамки çинче нумаййăн
çунса чупаççĕ сăмахсем тăп-тан.
Вĕсем те,
алăк хупăлчи хăй тĕллĕн
янравлăн усăлни те халлĕхе
мана тĕлĕнтермест,
такам «Ан тĕлĕн!»
тесе хытарнă тейĕн тимлĕхе.
...Ак — чан кĕвви!
Епле чĕнӳллĕ çемĕ!
Ак чăннипе тĕлĕнтерсе пире,
йăл-ял çиçе-çиçе çĕкленчĕ темĕн
шевли — те маччара,
те тӳпере?

Чăн тĕлĕнтермĕш вăл хăçан та ăнсăрт:
кĕтмен çĕртен тухать те куç умне,
хытса тăран,
                    ак-ак пулас пек тăнсăр,
эс ху тин çутнă пек ир шуçăмне.
...Анчах та — шел: ун еверлĕ саманчĕ
хальхи кунсен çукпа пĕр е — сайра.
Те çын,
киревсĕрленнĕ евĕр,
манчĕ
хĕпĕртеме,
те тухрĕ куççăра . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . .
...Мĕн турăпа пĕр тан ăста е гени
илес-милес кумир умра чухне!
Ķиленĕ — куракан-и,
          итлекен-и —
унпа,
чура пек çунтарса чунне...

Туссем,
çапла вĕркет-çке хăвăрт-хăвăрт
çын шухăшĕ...
арканнă хушăра.
Кун пек самаитсенче,
пĕлетĕр хăвăр,
асри курăнусем мĕлки çăра.
Пуç мимине ӳкерĕннĕ сăнсенĕн
пур имĕш вăрттăн майĕ-шывĕсем:
пулни,
пурри —
пуласси́нче сĕмленнĕн —
чăл çуталать: çĕн майлă-ши вĕсем?
Вара хăй —
чăнлăх —
курăнать яр-уççăн,
ак-ак ӳкес тумлам пек йăлкăшса.
...Хытса тăратăп.
Алчăрать пек куçăм.
Хĕнпе тăнлатăп чăнтăхнă сасса:

—...ăçта ăста ăçта чăн чăн асамçă . . . . . . .?.?
кам демиург ёçне туса пырать . . . . . . . . . .?.?
тирпейçĕ кам халь хăш клансем асаççĕ. .?
кампа кам пакапар... мĕн суптарать . . . . . .?.?

—...диктатор çук пур çĕнĕ диктатура . . . . .?.?
камра халь влаç... мĕнле халь перекет . . . .?.?
номенклатурăна кĕр те пул турă . . . . . . . .?.?
апат та ыйхă тутлă... пур рехет . . . . . . . . .?.?

—...ак заводсен гудокĕсем пăчланчĕç . . . . .?.?
чĕнӳ сасси çухалчĕ пăс пулса . . . . . . . . . . .?.?
таçта та экеметлĕ çуй пуçланчĕ
тĕлĕрттерсе тĕнтес пек ăспуçа . . . . . . . . . .?.?

—...гимнпа ёçе тухать те пролетари . . . . . .?.?
çĕн элитари... тăхăр сехете . . . . . . . . . . . .?.?
тăвар пулсан ёçченĕн пăрлă тарĕ . . . . . . . . .
хут мурĕсен пур непĕс... çук хевте . . . . . . . . .

—...çĕн ёç пуçлас тесен ыйтатпăр ирĕк . . . . . .
шутне пĕлсе çитми инстанцирен . . . . . . . . . .
хуçаланакансем нумай та пирĕн
хуçа çукрах чăрмав ытлашширен . . . . . . . . .

Ку — кив калав,
сюжечĕ те ун паллă,
ăнкарнă вăхăт та ун тупсăмне,
çапах хальхи кĕретлĕх çех ункайлă
хăйса уçма ун чи шалти сĕмне...
Қаç-қаç,
                    канма ларсан,
ăна эп илтнĕ
чикаркка туртмалли кĕтессенче —
унти йӳç тĕтĕм ман куçа та витнĕ...
Ирпе йăпатнă —
                                        тем кĕтсе —
                                                        тĕнче.
«Мĕн — тĕрĕслĕх? Вăл шутсăр та тем тĕрлĕ,
туп эс çынна чĕм кĕртнĕ чăнлăха.
Шан çутçанталăка — унта чун чĕрĕлĕ», —
текен сасса тăнланă пекчĕ-ха...

...Цех хӳттинчех пурнаттăм каçăн-ирĕн,
тухса тăватă ăстрăмлă ĕçе.
Юратăва упрамаллаччĕ пирĕн —
пит кирлĕччĕ хваттер: кил-кĕрепçе . . . .
. . . . . . . . . . .
Пĕлеттĕмччĕ тискер тĕрĕслĕхе те,
асрахчĕ-ха юнли,
ютти,
юрли...
Вил вăхăт тупăкĕ — пуш пӳрт сехечĕ
çапатчĕ тĕлĕкре: синкер палли . . . . .
. . . . . . . . . . .
Поэзи сиплĕхне ун чух упрарăм
çисе ĕçлевçĕ çăкăр-тăварне.
Те çĕнĕ тивĕç ку,
те... татман парăм —
чăмап чи йывăр темăн аварне.

Çак прозăран,
тен,
хăтăлайăп ӳлĕм,
мана вăл кĕрнеклеттĕр хальхинче.
Музей пекех,
чăнах та,
капăр пӳлĕм —
пур тем те çӳллĕ çӳлĕксем çинче.
...Хайхи çуткам япалана сăнатăп,
ун тĕлĕшне ăнкармăп-и тесе.
«Ăслайлăн ăсталанă! — ăмсанатăп,
кашни тĕс,
кĕвĕ тĕллине сиссе. —
Ку — тĕрлĕ тĕслĕ кĕвĕллĕ маяк-çке!
Ун кĕввинче пур çунăк чан сасси...
Апла кунта ăславçăсем майлаççĕ
çĕн ч ĕ н ӳ  ч а н ĕ!
Алă çупас-и?!

Йăлттам хĕвел çути пек йăлт курсассăн
вăр-вар вĕçсе тухасчĕ ăшшалла —
çŷресчĕ ирĕкре! —
Анчах ыр сассăн
пур çĕнĕ вăйĕ — вăл чĕнет шала.
Ертŷçĕ еккине ярса калаçтăр:
ун ĕçĕ — эп ăнкарайми илем.
Çумне пусăрăнса ларса пĕр ластăк
çĕн компьютерăн чĕлхине итлем.
Вăл,
вĕрентсессĕн,
сăвă та майлать-мĕн
программăллă машина чĕлхипе.
Тен,
шăп çак сивĕ интеллект малашлă?
Чун темшĕн чулланмасть вĕчĕхŷпе...

— Хăлхасăр! Ҫуссăр! Ним те чухлаймарĕ!
Поэт... туймасть хăй чунлăх туртăмне!
Епле хайласăр каччăччĕ... Хăй мар-и
тупа тума чĕнсеччĕ вут умне! —
ман пĕлĕш,
кӳренсе кайса,
ал сулчĕ,
вăрт ҫаврăнчĕ ертӳҫĕ еннелле...
. . . . . . . . . . .
Чĕнӳ чанне сӳнтерчĕ шăплăх сучĕ...
Мĕнле ҫак намăса ман тӳсмелле?!

Пур айăп.
Пур сăлтав.
Ҫашни хăй тĕрлĕ.
Тӳртем сăмах уҫайĕ-и тӳрех?

...Кунҫул кĕнекине ҫырас ĕҫ тертлĕ,
тĕп тупсăмне уҫас ĕҫ тертлĕрех.

Шыравлă шухăш сăмаха чăл çуттăр,
сăпайлăх ан кăлартăр халапçа, —
тинкерлĕн тĕкĕнмен проблема çук-тăр,
ларатпăр ак хĕрӳллĕн калаçса.
Ман пĕлĕш заводри дизайнер имĕш,
конструктор-мĕн ертӳçĕ текенскер.
Ыйту çине ыйту —
ак çĕрмĕш,
пинмĕш:
ăнкар,
тиркевлĕн сӳтсе яв,
тишкер.
«Пур т у р ă ĕ ç ĕ т ă в а к а н ăстаçă
тус-юлташсемĕн пĕчĕк йышĕнче.
Кусем халь кам ĕçне-хĕлне тăваççĕ? —
сехĕрленме пуçлап. — Хăш хăш енче?..

— ...завод историне пĕлетĕр пулĕ вут шарлă тамăк
вăрçă çитнĕрен ăна тыла ăсатнă хурлăх çулĕ...
кунта ăна çĕклерĕç çĕнĕрен аманнă ĕнĕхнĕ станоксене
хурса нăк никĕспе электроçутă лартаттăмăр çеремлĕх
уççине вара—ĕçе...кăраччĕ вăхăт сучĕ... йĕтре пек тум-
лапа перетчĕ çумăр ырхан ўт витĕр шăхăратчĕ çил
миçе чĕлхеллĕ паттăр çума çумăн ĕçлетчĕ ши тулличчĕ
пирĕн кил . . . . . . . . . . . . . . . . . .

— ...мана тăна кĕртсе илсе килсеччĕ сехре хăппи текен
завод шкулне... мĕн курнă-тўснине аса илсен те темскер
сўлентерет чун-чĕрене . . . . . . . . . . . .
çак çунăк тимĕр пулнă чĕнў чанĕ хатарлă тертлĕ тимлĕ
çулсенче вăл Кремль куранчĕпе пĕрле янранă...
илтсен çанçурăм кайнă çўçенсе . . . . . . . .

— ...ниçта нимле шăнăçайми хаваслăх ялав çĕклерĕ те...
мăрье тăрне çĕн гудокне кăшкăрттарса хăватлăн
завод пуçларĕ Çĕнтерў кунне . . . . . . . .

— гудок халь çук анчах сасси ун сывă...
кунта вăл
упранать хăю çинче
ăна итлетпĕр пӳлĕнес пек сывлăш
çуралчĕ!
ӳсрĕ!
чакрĕ
çук
инçе
вăл!
шăп та шай унпа яш чух вăраннă
епле сатур хурав!
чĕнӳ!
йыхрав!
халпа та тӳсĕмпе те авăрланнă ăна илтсен
манма та йывăр ав

...Эпир халь шиксĕр: е — япшар оратор,
е — чăрсăр тӳрĕ çын, е — чыс тӳри.
Пĕрре — малашлăх тупсăмне шыратпăр,
тепре — пăшăрханатпăр çав тери.
Тăнланнă,
тĕннĕ çын ялан сăпатсăр —
тинкелмĕ нимшĕн те йӳçе-йӳçе.
Çич çул юсавлăн алă çупнă паттăр
кĕтмен çĕртен тухать кĕрешӳçе...
Йăваш та чĕмсĕр янавар та акă
çăвар уçма пуçлать пухусенче.
Теприн чĕлхин вĕçерĕннĕ чаракĕ.
Мĕн чухлĕ тытнă тим... шур хут çинче!
«ПĔРРЕМĔШ СОВЕТСЕН ÇĔРШЫВĔ
ТИВĔÇ
ЧИ УÇĂ, ИРĔК ДЕМОКРАТИЕ!»
тени пулма пуçлать шалти,
тулти
ĕç.
Анчах мăн бюрократи те чее...

«Татах çав бюро-крати!» — тейӗр эсӗр.
Çапла,
чӑнах пуçватмӑш çак сӑмах:
епле вӑл шӑнӑçуллӑ,
сӑнсӑр-тӗссӗр,
пӗлтерӗшӗ — синкерлӗ пӑтӑрмах.
Патша влаçне те,
интервенцие те,
фашист вӑр-хурахне те çӗннӗскер,
ӗçхалӑх çак йӗке —
е вӑл ие, тен?! —
нимле тӗп тӑваймасть...
Ҫам çав тискер?
Йӗкпе иен екки-мекки çапла-мӗн:
ялан чи кирлине,
чи ыррине
чӑмлать те хӑварать —
аçа çапасшӗ! —
каяш сехри витти чун вырӑнне...

Қамсем-ши —
çĕн тавраш-ши, кив тăшман-ши —
чăрмав ĕрчетекен ылмашмăшсем?
Пире мĕн чухлĕ мăшкăл-хур туман-ши
хĕсмет сулхăнĕнчи мăш-маш этем!
Мĕнле йăхран вăл?
Қам ун ашшĕ-амăш?
Хăçан, мĕнле пуçланă мăнланма
пытанчăк мурăн йăпăлкка юратмăш?
Хăтланăш ун килпетсĕр,
алама.
Кресли пур чух чару патши пек çиçĕ
влаç е йĕрке евĕрĕсен хуçи
. . . . . . . . ,
. . . . . . . . ,
Чĕнӳ чанне янратрĕ вăхăт:
«Çитĕ!
Хуппин пур революцилле уççи!»

...Унччен ман кăшкăрса ыйтас килетчĕ:
«Çынсем, мĕн пулчĕ-ши сире?!» — тесе.
Халь çĕн ăслав чан çапнине илтеп те,
чĕрем йăл илнĕ пек,
ирĕкленсе.
Кунта —
ĕç храмĕнче —
ăнлантăм пайăр
ултав ытла тăкаклă иккенне
(тен, тепĕр майлине те-ха тупайăр —
хальхи кĕрет суда тивĕçлине...).
«Капла пулма пултараймасть ку урăх!»
тени каппайлăх вăййине пӳлсен,
кăтартрĕ Ленин партийĕ те —
курăр! —
вăйне,
тӳрĕлĕхне
шалтан,
çӳлтен.

Çапла пуласси́не эпир ĕненнĕ
чи нĕрсĕр анекдотлă çулсенче:
ĕçхалăх влаçĕпе иртĕхекенĕн
шăпи пĕрре — тăмхи ун хул енче...
Трагеди хыççăнхи трагикомеди
мĕнле вĕçленессе кĕтсе ларман, —
пăтравлă кăмăллисене хĕсметçĕ
мухтав паллисемпе пăталаман . . .
. . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . . . .

Штат чакарма май пур — пире чакарнă,
элекçĕ «мнени тунă»,
ĕç паман . . . . . . . . . . . . .
Партбилетсем çине нуль те çыртарнă,
коммунистсен ятне эпир яман.

Чĕн,
ÇĔНЕТӲ!
Эс — ман малаш,
ман тема.
Эс — пултаруллӑ,
пархатарлӑ ĕç.
Никам
        нихçан
                çитес çĕре çитеймĕ
çултан çĕтсе сĕнксе пырсан кĕç-кĕç.
Вут-тăвăлта,
хĕн çулсенче упраннă,
темпе те тĕрĕсленнĕ чăнлăха
суя сулăмлăхран хăтарнăран-и
çынсем татах сатурланаççĕ-ха.
...Мана та пĕлĕш тĕлсĕр чĕннĕ темĕп
тĕлпулăва —
                çакна ăнланнă, тен:
хăйне хăй çех пĕр çын та çĕнетеймĕ,
пĕрне-пĕри —
йышра —
çĕнетмесен.

Ырпиллĕн,
шеппĕн калаçас тесеччĕ,
хĕрӳлленсех кайман-и, тупата!
Чанне çапать ак электрон сехечĕ,
чĕнӳ чĕртет салху сăн-сăпата.
Асам çутать пек тĕрлĕ тĕс вылявĕ,
аслăлатать пек кĕвĕ пӳлĕме:
ăна юрать пуль —
мĕнешкел вăл, авă!—
ĕç храмĕнчи тĕп вырăн пуль теме.
Апла хальхи чăн-чăн ăста çынна та
шыравçăн çивĕч куçĕ тупĕ,
тен?
...Епле муритленеттĕм эп,
çунаттăм,
пулас илем лапăртанса пĕтсен!

Камит геройĕ «лабордан-с»* тени те,
çулпуç «либердансем»** тени те ак
аса килетчĕ:
тертленеттĕм питĕ:
«Сăмах та, ĕç те лапăртанчăках!»
Эппин,
пур тепĕр майлă тĕлĕнҟермĕш —
çак ячĕшĕн çех тунă ĕç,
тем-тем...
«Пире пырать кун пек те!» — тетчĕç темшĕн
пĕрне-пĕри «эс — тунтăк» текенсем.
Хăйсем сăмах тусан та шăртланатчĕç:
«Ан сур рабочи класс чунне!» — тесе.
...Тен,
çав кив заводра халь шарт ăнать ĕç —
хăвăртланса,
тĕпрен çĕнетĕнсе?

---

* Н. В. Гоголь çырнă «Ревизор» комедири Хлестаков каланă сăмах
** В. И. Ленин фразăсемпе сӳпĕлтетме юратакан Либерпа Дан хушамачĕсене пĕрлештерсе тунă сăмах

— Çак çӳлĕксем çинче — дизайнер ĕçĕ.
Куратăп: модельсем.
Хитре, ай-яй!
Вулатăп: «Экстра-класс шутне кĕреççĕ».
Илтетĕп: — Тĕнчери чи çӳллĕ шай.

— Кунта вара — конструкторсен еткерĕ:
сăнавлă е чи лайăх тĕслĕхсем.

— Ку — кулленхи продукци. Тĕрлĕскер-и?

— Ак — юрăхсăр пăсташ: пăхма кичем...

Умра — нумай çулхи ĕç-хĕл тӳнтерĕш:
илем,
пахалăх тĕп пулса пынин
кĕретлĕхĕ...

Те — терт ку,
те — тискер ĕç?!
Арпашрĕ шухăш — меллĕ сыпăнин...

«Искусство, технологие ан тӗкӗн —
чечен илем, поэзи ҫук унта,
пулас та ҫукка. Тыт та акӑш тӗкӗ
ҫыр ҫепӗҫ сӑвӑ — ҫиҫ те, ҫуйкӑн та,
вӗҫсе юмахсенчи вут кайӑк евӗр,
чун тӳпине ачашшӑн ҫӗртӗнсе
ҫунат варкӑшӗпе... Илем хӳтевсӗр, —
эстет юмлатчӗ, — ыт-тӗкел тӗнче...»

Тен,
ӗмӗтӗм йӑлттам янкар шӑратӗ
пурна киле...
Халь —
заводра чухне —
пӗлсе ҫитесчӗ сӳрӗклӗх ҫуратнӑ
тирпейсӗрлӗхӗн технологине!..

— ...чун индикатор пек туйса илетпӗр халь куҫӑн ултилакана тӳрех вӑл мӑнӑлӑх ваййин чури килпетсӗр такам вӗрсе хӑпартнӑпа пӗрех . . . . . . . . . .
малта ҫӳлте пулас килет-ҫке унӑн эппин пуҫ ан ҫӗкле ытти хатти отчет вӑл шут ыйтать шут пар йыш ӑмӑртуллӑн илемшӗн чыслӑ преми тухать-и...
ӑсталӑх илемрен ытла мӗн парӗ пахалӑхшӑн ҫунсан тӑваймӑн план ҫитменнине ӑста ҫын харсӑр мар-и ӑна пӑхӑнтараймӗ шӑпӑрлан . . . . . . . . . . .

— ...апла йышра кирлех и супинккелӗх хала вӑтамлатса пӗрпеклетсен . . . . . . . . . . . . . . .
Минренӗ пуҫлӑх пурнӑҫӗ инкеклӗ ӑслайлӑ ҫын ӗҫре ҫӗн мел сӗнсен комиссисем ӗҫ нормине ӳстерӗҫ ытти хатти текеннисем вара пултӑклине йышпа ӗҫрен хӳтерӗҫ пит вӑрттӑн хатӗрленӗ пухура . . . . . . . . . .
наян мӑран технолог шӑпӑрт ларӗ малта мӑнаҫлӑ президиумра завод нумай пӑсташ продукци парӗ юлахайсен юлхавлӑхне кура . . . . . . . . .

Ёç планёсем «ытлашшипех тулсассăн»,
тĕллевлĕ митинг е пуху уçса,
йыш умĕнче доклад туса мăн саслăн
мухтанĕ,
хăй каларăш,
пуç хуçа.
«Кусса çӳрекенни» ятли те юрĕ,
ăна —
ыталаса та чуптуса —
тыттарччăр çех ялав!
Ун чунĕ юрлĕ,
сулмак сĕтев хушассине туйса...
Çывхарнă май ёççыннисен уявĕ
вăл кĕтĕ кĕрмешсе тĕкел парне.
Çĕн «пуçару» шăв-шавлăн сӳтсе явĕ,
маттур спецкорр чĕнсе хăйсем патне.

Чăн,
юлхава ялан уяв:
юрлать вăл
пĕр евĕрлĕ мухтав юрри пĕрмай.
Унта,
кунта кая тăрса юлатпăр —
чан вырăнне чанкать çӳлти папай . . . .
Ак сӳнчĕ чунлăх кĕртнĕ çивĕч шухăш.
Ак тимлĕхе пулать тем чĕмери . . .
. . . . . . . . .
Çук тĕлĕнтермĕш,
ун мĕлки — кĕл шупкăш.
«Ку — ним çукран нимĕр!» темĕр-и?
Хăçан,
камсем,
мĕнле-ши
ютăхтарчĕç
çынран ултавсăр пурнăç тупсăмне,
чăн-чăн ăсталăх,
тивĕçлĕх,
хастар ĕç,
чыспа
совет пахалăхĕн сумне?!

— ...часах çак кăтартуллă ырлăх чирĕ çынна йыша çиме пуçлать шалтан ак вертикаль çыхăнăвне вăл çирĕ ак хупăнчĕ горизонталь шалтах
ĕç майлашмасть чакать чакать те тупăш ӳсет пин парăм мĕльюнсен мăйи
капиталист валли тутарĕç тупăк пире юрать пур-çке... çĕршыв кĕсйи
вара кивçенленсе пурна пуçлатпăр колхоз завод тата пит те паха наука институчĕсем те латсăр
такмакçăсем çаплах талпаслă-ха

—...çаплах чун çӳллĕ чи таса ăнлав та ятне ярсан пуç-лать мĕн йӳнелме
ыйтса тархасласа çӳрет ăславçă парсамăр ирĕк çак ĕçе сĕнме... ун ĕçĕ чăн-чăн çĕн изобретени вăл парĕ тĕлĕн-термĕшле эффект хăй пуçаруçă тен çĕршывăн генийĕ. ...лӳ те тумаççĕ пуснă-ши нехек...
ак ирĕк памалли вăл ку инстанци чăрмав кӳрекенни чараканни пулса тăрать унран нимле ниçта та иртеймĕн .кирлĕ виза чин хуни

— ...чăнах та виза хуракан халь шутсăр пĕр-пĕр ĕçе хута ярас тесен малтан шур хут ун умĕн меллĕн шутăр ал пусмалла ăна нĕр ăстисем
миçен вĕсем кам шутласа кăлартăр ӳсеççĕ тунката кăмпи пекех пĕрне кĕтмен çĕртен кăшт салхулатрăр ĕç путланать хускалмасла текех
пĕр кăлтăка тӳрлеттерес тесен те халь ирĕк илмелле 1 01 çынран

— Қаçар,
хăна.
Ешентĕн те пуль ĕнтĕ.
Чĕнӳ чание тус тĕрĕслĕ.
Эс кан.

Халь санпала пӗр-ик самант,
пӗр канӑм —
куҫран куҫа,
чунран чуна пӑхса —
эп калаҫасшӑн,
ырӑ вулаканӑм,
чӗнӳ чанне майланӑ май чарса.
Сана эп чухласах-пӗлсех каймастӑп,
чун-кӑмӑлна туйсассӑн та чӗре.
Сӑнна ютшӑнтарса эп ҫухатман тӑн:
эс — маншӑн халӑхпа пӗр тан тӳре.
Чун тӗпӗнчисене те —
ӗлкӗрсессӗн —
сӑвӑласа кӑтартӑп-ха пӗрре:
ыхлаҫ сӑмахлӑ,
чӑнлӑхлӑ кӗретлӗх
пире тӑванлаштарӗ ӗмӗре.

Эп сăвăран шăпа тăвас тесеччĕ,
тăвасшăнччĕ поэзи шăпамран.
Эй,
çаврăмсем,
епле кăна тÿсеççĕ!
Вулатăп та — суран çине суран...
Шăп çавăнпах пуль,
ырă вулаканăм,
сана ялан тивĕçтермен вĕсем?
Шалти сăнар та вăрттăн «ункăланнă»,
сив уйăх евĕр катăлса сÿнсе...
Мухтанăттăм кашни поэма,
сăвă
кунçул кĕнекинчи пĕр пай тесе —
май çук:
чылай страница тăкăс авă
е çук та —
кам-ши вăтăрнă,
чĕрсе?..

Çук-ха унта яш вăхăтсен пĕр пайĕ —
тен,
пурнăç шкулĕн тĕп урокĕсем.
Çав çулсенчи ыр пĕлĕш çавăнпа-и
ытарлăн чĕнчĕ:
«Ĕç храмне кĕрсем?!»
Дизайнер та,
конструктор тус та,
эп те
хастар рабочи пулнă çамрăк чух.
Халь хамăн завода аса илеп те
кунти сыхча чĕнеп:
«Тархасшăн, тух!»
Мĕн чул халап-юмах,
легенда илтнĕ
эпир цехри тăванлăх çутинче!
Ăçта вĕсем? —
тен,
манăçнă е вилнĕ
класс каста евĕр пулнă çулсенче?..

Пур айăпсем...
Йăвантарма та пулĕ
чылайăшне чăкăлташу çине.
Тĕрĕссипе ăнкарайман-ха путлĕ
хăçан чун цехсенчен ютшăннине.
Чун ютшăннă çĕртен поэзи писĕ,
çын ыр пил тытмĕ чунлăх çук çĕрте
е... супĕ те —
вара ун ĕçĕ,
пичĕ,
екки те нĕрсĕрленĕ — сисмĕр те.
«Сăмахĕ ун апла, хăй ак çапла-мĕн,
ĕçлет капла, пурнать апла-капла», —
тесессĕн халăхра,
ним те çăлаймĕ
çав çын чысне — эппин:
«Ҫайри — мала!..»
...Шăпа мана шеллерĕ пулмалла —
сыхларĕ тĕрмерен те,
сар çуртран та,
чи нĕрсĕр мăшкăлта та пуç упранчĕ,
терт питĕрсен те уçă кăмăла...
...Килти пĕчченлĕх читлĕхне пуç ячĕç
мана чаппа шалу пайлакансем,
халь ак пасарлă кун виç пуслăх ячĕ
кашнийĕн йўнелет — кун иртнĕçем...

...Сайра хутра кăна та
витерӳллĕн
поэт каланă малашнехине:
ку — тимлĕ пултарулăх,
шăп вăл ӳлĕм
систерĕ: «Лекнĕ майлашу хĕне!»
Синкерлĕ намăс-симĕс летаргийĕ
вĕçленĕ çех — пепке пек вăранса,
этем вăтанĕ:
«Çĕр-анне арки-и
пире çăлса хăварĕ,
мур ассан?!»
Пуç миминчи кив кăмăска кăмпи те
пӳлеймĕ çĕнĕ шухăш таппине.
Харамсасен каяшĕн сĕмсĕр пичĕ
сехре хăппи пек тухмĕ куç умне...

Хӗн! хӗн! хӗн! хӗн! — шаккать пек чан сехечӗ.
Хӗн куç хупăмӗнчех тимсӗрленме.
Хӗн хӗмленме, шăнтсассăн çӗр сехмечӗ.
Хӗн! Çӗн! Чӗрт! Чӗн! — хистетӗп чӗреме . . .
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
Чӗре таппи кӗвӗлемен сив сăвă
кӗреймӗ самана кӗнекине —
вăл тертлӗн çырăнса пырать,
мӗн тăвăн,
чăрмав та тупăнать çине-çине.
Цехра пире йăпатнă юмахсем те,
легендăсем те кивӗ халь — пӗлеп.
Çӗннисене —
хальхисене! —
чӗртсемччӗ,
мана итлеттерсемччӗ,
вăхăт! — теп.

Эп нӗрсӗр анекдотсене нихҫан та
чӑх-чӑх туса ҫӑтма кӑмӑлламан.
Юмах,
легенда ҫук,
лешсем, ав, янтӑ...
— Чану сан хатӗр мар-и,
меломан?
— Кур: хатӗр.
Вунӑ ҫул ӗнтӗ ак хатӗр
чӗнме тӗсӗсемпе те сассипе.
Часах вӑл тимӗр-тӑмӑра тухать-тӗр
«чи асӑрхавлисем» чурӑссипе.
Ҫыран маякӗ пек ҫӳле лартасчӗ,
хӑть ҫав громоотвод юпи ҫине —
ҫук ирӗк паракан...
Чӗнсен — хӑртаҫҫӗ:
«Сӗн дискотекӑна... йӑн-ян чанне...»

— Хăйсем пин-пин тăкакласа чĕнеççĕ
урамсенчи хут пĕлтерӳсемпе —
пĕр вĕçĕм:
«...кирлĕ!
...кирлĕ!
...кирлĕ!» —
теççĕ
кил-йĕрсĕр кайкăн-килкĕн ӳснипе.
Чи кирлисем камсем пулмаллине те
нимрен кирли мĕн-мĕн пулмаллине
пĕлместпĕр . . . . . . . .

. . . . . . . . . . .

Кам мĕнпе мĕнле çĕнетĕ
заводăн халĕпе ăна хăйне?
Илем ăстисене кăтартăр тетĕн?
Хăймастпăр халь илемшĕн çунăхма.
Эс тĕлкĕшлĕ вутах тепре чĕртетĕн,
тăвар сапан суранлă чунăма...

Çак çутă капăр цех хăй те ĕç храмĕ.
Шап-шурă тумлă атомниксемле
унта кĕретпĕр.
Çуйланма юрамĕ:
хĕрсем-хĕрарăмсем чипер епле!
Микропроцессорсем пухаççĕ имĕш
вĕсем микроскоппа сăна-сăна.
Микронлă тĕрĕслĕх,
тирпейлĕх,
тимлĕх
тĕлĕнтерет,
ăмсантарать мана.
Ĕç храмĕн ыр хуçи —
чăн юрпикех вăл! —
зал тăрăх кăтартса çӳренĕ май
ăса картап: ĕçлесчĕ кунти евĕр!
Поэзире халь лапăрти нумай...

Ак юрпике пăшăлтатса систерчĕ:
— Поэт,
куç хыв-ха çак хĕр-пикене.
Ĕçлет вăл микроскопсăр — çук куç терчĕ.
Тек тупаяс та çук ун пеккине.
Çĕртен,
пинрен те суйласа илетпĕр —
ун евĕр çивĕч куçлă хĕр курман.
Пӳрни тесен вара! — туйма пĕлет-тĕр
микронăн пинмĕш пайĕсем таран!
Ун амăш,
чаплă тĕрĕçсен тавраш̆ĕ,
тухъя-хушпу та шăрçаланă тет.
Хĕр,
чăн та,
хăйнешкел.
Мĕне кура-ши?
Те тĕлĕнтермĕш çын вăл?
Қам пĕлет...

Пĕлес тесен те хăлăхсăр хăтланмăн,
хĕрсе ĕçлекене чăрмав кӳрсе.
Çаплах тĕлпулăва та вăхăтлаймăн,
тата мехеллĕрех самант кĕтсе.
Кунта халь хуçрасчет пуçланнă тапхăр —
май çук тимсĕрленсе йăраланма.
Çапах ик-виç ыйту парса пăхатпăр,
пĕр-ик çĕн шӳт тупатпăр ыр сунма.
Васкавлă ĕç те,
сисĕм те,
пуплев те.
Этюд пекрех-ха сăнлăх та,
паллах.
Анчах кĕретлĕх хăй ыр пиллĕ евчĕ —
çĕн сăнарпа эпир тĕл пулмаллах.

Эппин,
пур тĕлĕнтермĕш те,
илем те,
ăста та,
чунлăх та ĕç храмĕнче?
...Вĕсен сыхчи татах мана иленчĕ
кăвăлтатса: «Ху халь пиртен инçе.
Кив юмахсем те,
çĕн легендăсем те
эс кĕртĕн-ха И л е м кĕнекине:
ун ыр сăнарĕ алăсти этемччĕ,
халь ă с ă с т и уçасшăн еккине.
Çуралнă май ытарлă çĕн сăмахлăх —
ăстайлă интеллект чĕлхи —
кунта
чăваш сăвви те пурăнтăр сăваплăн,
ун кĕвĕлĕхĕ улшăнсассăн та...»

Илтеп:

— Эксперимент цехне кĕретпĕр...
Аславçă çавăтсах пырать мана.
Анланăпăр-ши пĕр-пĕрне ĕретлĕн:
тăван-ши,
ют-ши çĕн чĕлхе чуна?

Тăнлап:

— Ак ЧПУ,
манипулятор,
микропроцессор,
ЭВМ,
дисплей...
Хăшпĕр прибор —
сăнамалли пуль —
ятсăр.

Ку чух дизайн та тĕрлĕ тĕслĕ, эй!
Анчах та шел,
чи витĕмлĕ илемшĕн
хушса тӳлесшĕн мар иккен пирте.
...Çама эп ӳпкелесшĕн е питлесшĕн
чăн-чăн ăсталăх сумлă мар çĕрте?..

Шарлакăн ик хĕрне çывхарнă тейĕр
хуркайăк картисем ĕретленсе,
темскер меллет хĕр-ар — шăвать конвейер:
шутлан,
тен,
роботсем кунта тесе.
Пăхсан,
        чăнах та,
                пĕр сăнар пек пурте,
ăнкарăн кăмăл çĕкленсессĕн çех:
чунсен ытарлăхĕ кунта та пур, тен,
анчах ăна уçаймăн кĕç-вĕçех.
...Кĕтевлĕн уçăлман чунсен шăпи те
çеçке çурман папаксенни пекрех.
Çĕн шанăç хастарлатнă çын сăн-пичĕ
куçаймĕ шеплĕ сăнара тӳрех.

Апла пулсан,
чи çивĕч ăслă критик
тиркешĕ: «Шутсăр шеплех мар ĕçӳ.
Сăнар — чи начарри те, чи ырри те —
çук çĕн поэмунта, çук хирĕçӳ...»
. . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . .
Микросехетĕн микрошăнкăравĕ
мехел килтернĕ хыççăн мелленме
вăл —
пӳлĕм апăсĕ —
хăй ăнкараймĕ
тĕп сăлтавпа тĕп айăп мĕнлине . . .
. . . . . . . . . . .
Çакна та вăл юри ăнланмăш пулĕ:
поэмăмри пĕр çаврăмшăн мана
илсе кайса çĕттерĕ вилĕм çулĕ,
татах урса кайсассăн самана . . . .
. . . . . . . . . . .

Ěç храмĕн хĕр-хĕрарăмне пуç тайрăм —
те тĕлпулу сунса,
те уйрăлса?
Чун пăлхавне кунта епле пытарăн —
йĕплет пек сыхчă тус: «Пĕл намăса!»
Çапла,
çук мар,
пур шутсăр пысăк парăм
хальхи ĕçлевçĕ халăх умĕнче:
поэзийĕн чанне ялан çапмарăм
малаш çути сĕмленнĕ çулсенче...
Эпир пĕр йышлăх-çке,
апла мĕн мурĕ
пире пурăнтарайрĕ супинккен?
Тен,
сĕмсĕр бюрократи диктатури
е тупсăмне тупма май çук инкек?..

Мĕн пулĕ хĕтĕх иртĕхсе кĕрсессĕн
чунпа ăс,
чунлăхпа ĕç хупшине
е чăнлăха суялăх сĕкĕнсессĕн,
ват пĕрĕхсе таса шур хут çине?!
...Халь ÿкĕнĕçлĕ сăмахпа́-и татăн
чуман çулсем ÿстернĕ парăма?
Çĕнетÿрен çĕн ирĕксем ыйтатăп
хастаррăн,
тÿррĕн,
тимлĕн пурăнма.
Завод çыннин ăс-хакăлĕ,
чун-варĕ
пурне те килентертĕр уçăлса
е тĕлĕнтертĕр унăн çĕн сăнарĕ,
сăвăланса кĕрсе çĕн эпоса.

Халь ир-ха,
ир мухтав юрри хывмашкăн,
кĕртме кашни çыннах çĕн эпоса.
Илтетпĕр алăк уçнă май:
— Ан ашкăн!
Мĕн хăтланан?!
Çу-ук, эс — çын мар,
сăпса!
Куратпăр: такама вăрçать хуралçă, —
леш кĕсйине тем чикнĕ пулмалла.
Ĕç аллисем чĕтре-чĕтре хураççĕ
сĕтел çине вăрланă япала:
темле хитре деталь тата темтепĕр...
Вăрри — кур! — вăтанмасть,
çилли кăра.
«Çĕршыв тӳсет — арчи-çӳпçи ун тĕпсĕр»
текенсенчен пĕри пулас умра.

— Çапла-а!
Çĕршыв мулне йăкăртакан та,
хысна вăрри те кайрĕ иртĕхсе! —
вăрçать çулланнă çын. —
Йыш хăртаканччĕ,
халь — ан чĕн,
курмăш пул та ут сĕнксе.
Вагонлă хыркăншăн хапха яр-уçă,
апла шалти-тулти кĕсъеллине
чар,
питĕркĕч,
йĕрле,
хуралçă куçĕ,
тĕнче хăлти пуртан,
ĕçхалăхне . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . .
— Рабочи класс ăçта?! —
шавлатпăр çуйкăн.
Илтетпĕр хирĕç:
— Класс пиртен капмар...
Вăл вăрă мар,
Вăрра тухас та çуккă!
Йăх-ях асси
хайхи-майхи — класс мар!

Чим,
эп хăш класс çынни? — шалтах аптратăп,
кĕрсе ларса арçын картинелле. —
Хресчен ачи,
тар тăкнă заводра та,
интеллигент та —
те виç класс пĕрле?
Чăнах та,
мĕнлерех-ха уйăрайăн
хăвна ху виç шая е виç класа?
Пĕрне асла хума та,
тен,
юрамĕ:
пайлаймăн пĕртăвансене касса...
Сийсем тесен,
поэзи сум сумлаймĕ:
халь пурнăç йывăççи çăпансăр мар.
Цехри хивре сăмах çакна алайлĕ
е халăх хушшинчи хыпар-хăнар...

— ...купца пек мухтанатчĕ пĕр снабженец пар çех цистерна спирт е çуттине тата чек кĕнеки куç хупичченех
тупса кӳртерĕп тамăк çатмине

— ...пуç сăхрĕç вăрттăн миллионерсем те патшалăх
курити тавращĕнче
лата лармасть пит меллĕн ĕнерсен те ултав кĕвви çемми
татать тĕнче

— ...рабочи кĕсйинче тупсан пĕр шайба пухатпăр сĕрлесе
юлташлă суд
вăрах вăрлаканни хăй тӳре шайлă... питле пуçлать эс
пирĕн йышшăн ют

— ...хысна вăррин Людовик гарнитура... кĕсъе
вăррин пĕр вырăн хутлă нар
шăпа тесен вара сыхлатăр турă!!!
ун пеккине юта та ан сунар

— ...чĕрчунсенчен чи нĕрсĕрри çапах та влаçра тăрса иртĕхекен иккен . . . . . . . . . . . . . .

Сĕм-тĕттĕм кĕтесре сăмах çапатпăр:
кашни — калавçă,
пурте — тимлекен.
...Татах яр-уçă репортаж тăваймăп
кунçул барометрĕ пек пӳлĕмрен.
Ҫалассине калаймăп йăлт — çук айăп...
Ҫитменнине çитерĕп ӳлĕмрен.
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

...ак урӑхла йӑха аса илетӗп,
тӑван бюст ҫывӑхне пырса ларса.
Пилеш йӳҫҫи чун суранне сиплет-и?
Хӗлччен,
тен,
кайнӑ наркӑмӑшланса.
Бетон ҫинче,
ав,
шутсӑр тӗксӗм пӑнчӑ —
тумланӑ тейӗн юн туратсенчен.
Ҫак сӑнлӑх шухӑша пусарчӗ,
пӑрчӗ.
Қаҫ,
вут тӗсне хӑть ан хурат сӗмччен.
...пур вӑрӑ-хурӑ,
  харамса таврашӗ
поэзире те вӑхӑтне кура —
ун йывӑҫҫин варне хӑртса павраҫҫӗ,
кашни чӑн сӑмахран хӑра-хӑра...

....тăван чĕлхе сĕтекĕн тутлă нӳсĕ
ялта кĕртет çăварăм тутине.
Ялтах поэзи пихампарĕ ӳсĕ,
туйса сăмахăн сиплĕ техĕмне.
Манран вăл тĕлĕнĕ,
мана вăл сивлĕ,
чечеклĕ ырлăхра çӳре-çӳре,
«поэзишĕн ют» темăна асилĕ —
ăнăçсăра тухма пӳрнĕскере...
Хула мĕнне пĕлсех кайман юлташăм
чухлаймĕ тавăм парăмпа пĕрне,
эпир хăр-тăлăха тăрса юлсассăн,
пире кам кил,
ĕç,
çăкăр
панине.

Тĕп пултаруçăсăр —
рабочи классăр —
Тăван çĕршыв тĕрексĕрпе пĕрех,
çĕнтерĕ çĕнетӳ унпа,
чухлатпăр,
Октябрь революцийĕ пекех.
Ĕç,
туйăм,
шухăш лапăрчăкĕ вирлĕн
ылмашăнсан малаш тупсăмĕпе,
тискер тирпейсĕрлĕх тупаймĕ витлĕх,
вăйланĕ халăх çийĕ чăннипе.
Ун чух ылханлă культ та,
иртĕхӳ те
хĕсеймĕ нĕрсĕррĕн Совет влаçне!
Йĕркешĕн касăхса шырамĕç хӳтĕ
ĕçлевçĕсем,
çитсе йӳтес вĕçне...

Пĕлсех пĕлмен тивлет мĕнне те путлĕ —
пурнатпăр халь те-ха хăра-хăра.
Пире нихçанхинчен,
тен,
йывăр пулĕ
шыравлă та пăтравлă вăхăтра.
— Пуç янисем,
  пуç хунисем,
  евитлĕр:
  эсир шанман-и революцие?!
  Ун Идеалĕ тухнă тамăк витĕр —
  ăна татах чăмлатăр-и ие?! . . . .
. . . . . . . . . .
. . . . . . . . . .
Сывалтăр,
çĕнĕрен вăй илтĕр,
çиçтĕр
вăл çутçанталăк нĕрĕ пек тасан:
чи çутă ĕмĕтпе тĕллев уççисĕр
малашлăх пушă сĕмлĕхпе пĕр тан...

Чĕнӳ чанĕпеле кĕтет ĕç храмĕ
çĕнетӳпе хăвăртлату хумне —
çĕн революци аркатма хăрамĕ
чару туне,
чăрмав-хӳме чулне.
Хăватлантарĕ чăн-чăн демократи
кунран-кун паттăр ĕç пархатарне.
«Совет пахалăхне тĕнче курать-и!» —
ăслайлă çын мухтанĕ ун чухне.
Вăйпа вăй,
çĕршывпа çĕршыв тавлашмĕ —
пуçланĕ мирлĕ ырă самана.
...Хĕвел —
уярланан çанталăк ашшĕ —
телей сунса лăпкарĕ пек мана.

# ТУПМАЛЛИ

## ÇЫНСЕМ. ЙĔРĔХСЕМ. ТУРĂСЕМ. САВĂ ЯРАМĔНЧЕН

Ман халăх . . . . . . . 6
Илемсĕрлĕх чĕлхи . . . . . . 7
«Хупăниччен чипер пепкен...» . . . 8
Ĕмĕрхи чĕнӳ . . . . . . . 9
«Ан васкăр аннĕрсем çĕре кĕмесĕр...» . . . 10
«Пуçланнă çĕрте Çарăмсем эс...» . . . 11
«Макăрать çутçанталăк, талхăрать çĕр-анне...» 12
Çутçанталăк тĕнĕ . . . . . . 14
Тĕп ят . . . . . . . 17
«Çакна куллен, ялан...» . . . . . 18
«Çĕр ăшĕнчи вĕри шăранчăк пек-шим...» . . 20
«Чун çук!» — тетчĕç...» . . . . . . —
«Тăхăр шайлă, сакăрвун пĕр сумлă...» . . . 21
Йӳтенĕ йĕрĕх . . . . . . . 23
Шанчăкран тухнă йĕрĕхсене улăштарни . . 24
«Татах юхса каять çурхи шывпа...» . . . 26
«Типет-шим, çак çăлкуç пекех типет-шим...» . 27
Икĕ юрă . . . . . . . . 28

«Сар ачаччĕ эпĕ, сар ачаччĕ...» . . . . . 29
«Куçĕсем çулçă пек...» . . . . . . 30
«Сăнар шыра-шыра куç уçрĕ пуль сана...» . 31
Савтилет юрри . . . . . . . 32
«Çĕлен куçĕ текен пĕчĕкçеççĕ чечек...» . . —
Пил кĕперĕ . . . . . . . 33
«Эп хытсассăн пытарма ан ‘пыр...» . . . . 34
ÇЕРПЕ ТӐПЕ. Мир поэми . . . . 35
ХĔВЕЛ ТАШШИ. Асамлă асанлӳ . . . . 107
ЧЕНӲ ЧАНĔ. Публицистикăллă поэма . . 119

**Василий Иванович Эндип**

---

## НАБАТНЫЙ ЗОВ

Стихотворения, поэмы

На чувашском языке

Редактор П. Е. Димитриев
Художник В. М. Ширшов
Художественный редактор М. Д. Давлятшин
Технический редактор Л. Н. Кондрашкина
Корректор Р. П. Кудряшова

ИБ 2215

Сдано в набор 13.04.89 г. Подписано к печати 09.08.89. НТ 29701. Формат 60×90¹/₃₂. Бумага типографская № 1. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 6,0. Усл. кр.-отт. 6,0. Учетно-изд. л. 5,13. Тираж 1000 экз. Заказ 1268. Изд. № 41. Цена 70 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

1.90

70лет